Декабĕрĕн 12-мĕшĕ—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун

Хастарлăн хатĕрленеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ („Чăваш Коммунĕ“ корр.). Пĕрремĕш суйлав участкинче 1.374 суйлавçă шутланаť. Вăл шутран комбинатра ĕçлекен рабочисем 957 çын, килхуçи арăмĕсем—246 çын, ыттисем вĕренекенсемпе урăх çĕрте ĕçлекенсем. Ку участкăна 24 çуртра пурăнакансем тата пожарнăй охранăра ĕçлекенсемпе фабрик-завод шкулĕнче вĕренекенсем кĕреççĕ.

Ку участкăра доореннăй пулса Е. Пономарйова йулташ ĕçлет. Вăл хăй комбинатра, авса пукансем тăвакан цехри инженер, комсомолкă. Цехра та, хватерте те агитаци ĕçне пысăк тимлĕхпе туса пыраť. Суйлавçăсемпе пуху туса иртернĕ. Пономарйова йулташ хаљхи вăхăтра, РСФСР-чен Горький суйлав округĕ тăрăх Националѣнăçсен Советне депутата суйлама регистрациленĕ В. П. Чкалов, Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне депутата суйлама регистрациленĕ А. М. Краснов тата Националѣнăçсен Советне депутата суйлама регистрациленĕ И. В. Новиков йулташсен кандидатурисем çинчен суйлавçăсем хушшинче агитацилет. Пĕрваскамасăр, çак кандидатсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ăнланмала каласа параť. Акă нумайах та пулмасť, пукансем тăвакан цехра пулса иртнĕ пухура кандидатсем çинчен каласа парсан, рабочисем пĕр сасăлан, Аслă Совета депутата суйлама палăртнă: Чкалов, Краснов, Новиков кандидатсемшĕн сасăлама пулчĕç. Çавăнпа пĕрлех рабочисем декабĕрĕн 12-мĕшне çулталăкри промфинплана тултарма обйазателствă илчĕç.

Пĕрремĕш суйлав участкин центрĕ—комбинатри фабрик-завод шкулĕ. Ăна илемлетнĕ. Урам йенче хĕрлĕ хăмачăсем çине çырнă лозунгсем, плакатсем çакăнса тăраççĕ. Суйлав пӳлĕмĕсене те пахалатнă. Çулпуçсен сăнĕсене илемлĕ рамкăсем туса çакнă. Çавăнтах плакатсем, картинăсем, схемăсем пур, Аслă Совета депутата суйлама регистрациленĕ кандидатсем çинчен витринă организациленĕ.

Суйлав комиççи ĕçлесе ларакан пӳлĕм таса, илемлĕ. Кунта Сталинла Конституци, суйлав йĕркисем çинчен калакан кĕнекесем, тĕрлĕрен хаçат-журналсем, шашкă-шахмăт тата ытти кирлĕ йапаласем пурте пур. Суйлавçăсен спискисене çаврăнса тăракан урайлă хăмасем çине çыпăçтарнă. Ку ентĕ суйлавçăсене хăйсен йачĕсене тĕрĕслеме питĕ аван.

Кашни куллен суйлав участкине 80—150 çын пыраť. Хăшĕсем йачĕсене тĕрĕслеме, теприсем суйлав йĕрки çинчен ыйтса пĕлме пыраççĕ. Суйлав комиççи членĕсем вĕсене йаланах тĕплĕн ответ параççĕ. Калас пулаť, хула совечĕ суйлавçăсен спискине пур йенчен те тĕплĕн туман. Нумайĕшĕн йачĕсене, çуралнисене тĕрĕс çырман, улăштарса пĕтернĕ. Ун пеккисем 10 кун хушшинче 53 çын тупăннă.

Пĕрремĕш суйлав участки лайăх ĕçлени, пĕтĕмпех суйлав комиççинчен килет. Участкăри суйлав комиççи председателĕ Левашев й. хăйĕн членĕсемпе таччăн çыхăнса ĕçлесе пыраť. Комиççи членĕсем Балашов, Ваганова, Никитина йулташсем те аван ĕçлеççĕ. Пĕтĕмпе суйлав пӳлĕмĕсем 12. Халĕ вĕсем пурте хатĕр, пӳлсе тухнă. Вăл пӳлĕмсене фанер хăмисенчен çапса тунă, хушăк-çурăк çук. Çавăнтах клей, карандаш т. ыт. те пур. Сĕтелсене вырнаçтарнă. Буфет, кĕтсе лармали пӳлĕмсене те хатĕрленĕ.

4 мĕш суйлав участки те суйлава хĕрӳлен хатĕрленет. Суйлав пӳлĕмĕсем (пĕтĕмпе вĕсем 14) хатĕр. Карандаш, клей, кистăчкă таврашсене пурне те илсе хатĕрленĕ. Електричествă çути пулмасан запаслăх 14 лампă пур.

Суйлав саккунне тата регистрациленĕ кандидатсем çинчен суйлавçăсене каласа ăнлантарас тĕлĕшпе 8 агитатор ĕçлет. „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенийе“ вĕренме 16 кружок организациленĕ. Вăл кружоксенче 525 çын вĕренет. Участкăри суйлавçăсемпе икĕ хутчен пуху туса иртернĕ.

— Епĕр суйлавçăсене кĕтсе илме хатĕр. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче суйлама пухăнсан, вĕсене ваљљи хĕрлĕ кĕтес, буфет организациленĕ, йаслĕ те пулаť,—терĕ 4-мĕш участкăри суйлав комиççи председателĕ Кузнецов йулташ.

Çакăн пек ĕçлеççĕ суйлав участкисем. Вĕсем чăн та декабĕрĕн 12-мĕшне хастарран хатĕрленеççĕ. Кашни суйлавçă суйлав урни патне пырса çак телейлĕ пурнăçшăн вăйа хурса ĕçлекен çирĕп болљшевиксемшĕн сасăлма хатĕр.

Хаљ. Лисин.

★ О ★

Çĕмĕрле хулинчи предприйатисенчи рабочисем сталинла вунăкунлăха хутшăнчĕç

Декабĕрĕн 1-мĕшĕнче комбинатри цехсенче тата „Болљшевик“ заводра рабочисемпе инженерла-техникла работниксен митингĕсем пулса иртрĕç. Митингсенче стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхне хутшăнасси çинчен сӳтсе-йаврĕç.

„Болљшевик“ заводри рабочисем хăйсен 11 уйăх хушшинчи ĕçĕсем çинчен сӳтсе-йавнă хыççăн пурте пĕр хавасл ăхпа вунăкунлăха хутшăнса ĕçлеме пулчĕç.

— Епĕр, механически цехри рабочисем, стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхне хутшăнса ĕçлесе, завода пĕр чарăнусăр ĕçлеттерме, пĕр аварисĕр ĕçлеме пулатпăр,—терĕ рабочи Самойленко.

Комбинатри пур цехсенче те çĕнĕ рекордсем тăвассишĕн хĕрӳлĕ кĕрешӳ пыраť. Столљарнăй цех çулталăк планне суйлав кунĕ тĕлне тултарма пулчĕ.

(Хамăр инфор.).

ПАРТОРГСЕН КАНАШЛĂВĔ

Нойабĕрĕн 29-мĕшĕнче Тутаркас районĕнче парторгсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу суйлав участкисенче политикăла агитаци ĕçне мĕнле туса пыни çинчен парторгсен отчочĕсене итлерĕ.

Канашлура тухса калакансем чылай çитменлĕхсене палăртрĕç. Чылай парторганизацисем хăйсен ĕçĕсене урăхлатса çĕнетмен, кивĕлех ĕçлеççĕ. Ку çак фактсенчен те лайăх курăнаť. „Çавăн чул кружок организациленĕ, çавăн чул çын вĕренет“, теççĕ. Анчах вĕренӳ пахалăхĕпе сахал интересленеççĕ. Довереннăйсем начар ĕçлени çинчен нумай калаçаççĕ, вĕсене ĕçре пулăшса пыни çук. Ку ĕçре парти райкомĕ те çителĕклĕ йертсе пыман. Ку вăл парторгсемпе канашлусем иртерменнинчен те лайăх курăнаť. Çавăнпа та политикăла агитаци çителĕксĕр пыраť. Тĕрĕслӳ ĕçне йĕркелемен пиркийех хăшпĕр суйлав комиççи председателĕсем суйлав кампани çине пӳрне витĕр пăхаççĕ. Парторг Никитин каланă тăрăх, Йемйаковски суйлав участкинче ĕçсем йапăх пыраççĕ. Суйлав комиççи председателĕ Коротков йулташ участкăна пырса та курăнмасť.

Суйлав участкисенче агитпунктсем радио итлессине организацилес тĕлĕшпе никам та ĕçлемеççĕ. Суйлав участкисене ваљљи лампă, чернилљница, ручкă тата ытти те чылай кирлĕ пулаť. Анчах ку йапаласене Тутаркас йалповĕнче те тупса илме çук. Чăвашсойузăн та ку ĕçре пулăшу пани кирлĕ.

Канашлу ку çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме хушса хăварчĕ.

Епĕр пайанхи номĕрте канашлура Дубровскипе Николайев парторгсем тухса каланă сăмахсене пичетлетпĕр.

Парторганизацин агитацилĕ ĕçĕсем

Дубровский—Тутаркас территорилĕ парторганизацин парторгĕ

Епĕр 8 йалта 26 кружок организациленĕ. Ку кружоксене йертсе пыма 23 агитатор уйăрнă. Кружоксенче пĕтĕмпе 589 суйлавçă Аслă Совета суйламали Положенине вĕренеççĕ. Кунсăр пуçне тата коњухсене, ватă стариксемпе карчăксене, ачалă арăмсене вĕрентме 14 çын уйăрнă. Вĕсем килĕсене çӳресе верентеççĕ. Заљатисем пулас умĕн агитаторсене пухса семинарсем иртеретпĕр, канашлусем тăватпăр. Агитаторсемпе пĕтĕмпе 8 семинар туса иртернĕ.

Суйлав кампани пуçланнăранпа колхозниксемпе 30 пуху, хĕрарăмсемпе 5 пуху, ватă стариксемпе пĕр пуху туса иртернĕ. Ку пухусенче Сталинла Конституципе çĕнĕ суйлав саккунĕ çинчен сӳтсе-йавнă. Октабĕр революци 20 çул тултарнă тата тĕн сĕрĕмĕн сийене çинчен пухусенче докладсем туса панă.

Пирĕн участкăна Калайкасси колхоз клубĕ кĕрет. Малтанхи вăхăтра вăл ĕçлемесĕр ларнă, халĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Клуба плакатсемпе, лозунгсемпе, çулпуçсен сăнĕсемпе илемлетеççĕ. Колхозниксене киљокартинсем кăтартма тытăнчĕç.

Епĕ хам участкăра суйлав комиççи председателĕ пулса ĕçлетĕп. Пĕтĕм ĕçе план тăрăх туса пыратпăр. Кашни комиççи членнех уйрăм ĕç панă. Сăмахран, суйлав комиççи председателĕн заместителĕ участкăри култмассăлă ĕçсемшĕн ответлă, тепĕр комиççи членĕ суйлав участкине илемлетессипе ĕçлет т. ыт. те.

Спискăсене тĕрĕслесе пĕтертĕмĕр. Калайкасси йалсовечĕ спискăсене питĕ нумай пăтратса пĕтерни палăрчĕ. Халĕ ку ĕçе йĕркелетпĕр.

Комсомол организацисем суйлав саккунне ăнлантарас ĕçе кирлĕ таран хутшăнмаççĕ-ха.

Парти райкомĕ те пире пĕрремĕш хут çеç канашлăва пухрĕ. Кун пек канашлусене пĕрре мар, час часах пухни кирлĕ.

Тепĕр йенчен Стецкий, Чкалов, З. Андрейева йулташсен биографийĕсене тупаймасăр хăшкăлтăмăр. Колхозниксем ку кандидатсемпе такçанах интересленеççĕ, ыйтусем параççĕ. Ку ĕçре районри хаçат та кирлĕ пек пулăшу памарĕ. Халĕ Чкалов, Стецкий, Андрейева йулташсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен хаçатсем çинче кирлĕ материалсене пичетлесе кăларнă. Ку кандидатсемшĕн агитацилетпĕр.

Крым АССР Тĕпçтăвкомĕн председателĕ Менбарийев Абдул Джелил Хайрулла—Йалттă суйлав округĕ тăрăх Националѣнăçсен Советне депутата суйлама баллотировкăна тăраť (Крым АССР).

(Сойузфото).

Чыслă ĕçĕн итогĕ

„Сейател“ колхоз (Тутаркас р.) кăçал илнĕ тырпула колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх валеçрĕ. Н. Андрейев семйи 825 ĕçкунĕ туса 59 центнер, С. Йаковлев семйи 776 ĕçкунĕ туса 54,5 центнер тырă илчĕç.

Колхозăн сысна ферми 4.000 тенкĕ тупăш пачĕ. Зубровский.

Кашни суйлавçăна вĕрентме тăрăшатпăр

Николайев — Кашмашри кандидатсен группин руководителĕ

Сталинла Конституцине тата Аслă Совета суйламали Положенине малтан епĕр хамăр кружоксенче тĕплĕн вĕрентĕмĕр. Çав вăхăтрах комсомолецсене, йалсовет, колхоз активĕн членĕсене 38 çын курсран вĕрентсе кăлартăмăр. Тата райком 4 агитатор çирĕплетсе пачĕ. Çак активпа çĕнĕ суйлав саккунне вĕренме тытăнтăмăр. Кашмаш йалсоветĕнче 11 кружок организациленĕ. Ку кружоксене 556 çын йавăçтарнă. Кружоксем чылайĕшĕ çĕнĕ суйлав саккунне вĕренсе пĕтернĕ те ĕнтĕ. Çакăн хыççăн колхозниксем çĕнĕ суйлав саккунне мĕн таран ăнланнине тата суйлав округĕнче палăртнă кандидатсене мĕнле пĕлнине тĕрĕслесе тухрăмăр. 556 çынран 511-шĕ суйлав саккуне ăнлании курăнчĕ. Епĕ хам та агитатор пулса ĕçлетĕп. Манăн кружокра колхозниксем çеç мар, йединоличниксем те вĕренеççĕ. Епĕр ытти кружоксене те йединоличниксене хутшăнтарнă.

Суйлав саккунне колхозниксене, йединоличниксене ăнлантарас май 10 хут колхозниксен пухуне туса иртернĕ. Енерхи пухура кандидатсем çинчен ăнлантарса пататăмăр. Кунсăр пуçне тата çамрăксемпе те пухусем иртернĕ. Ку ыйтуна йалсовет пленумĕнче те сӳтсе-йавнă.

Кружоксенчен вĕрентсе кăларнă хыççăн йалсоветпа колхоз активĕнчен каллех тепĕр 25 агитатор уйăртăмăр. Вĕсем ватă стариксене, карчăксене, ачалă арăмсене килĕсенче вĕрентеççĕ. Декабĕрĕн 12-мĕшне кашни суйлавçăнах суйлав саккуне пĕлекен тума задач лартнă епĕр. Ку задачăна пурнăçлатпăрах. Агитаторсене куллен йертсе пыратпăр, вĕсемпе час-часах канашлусем иртеретпĕр, ăнланман ыйтусене ăнлантарса паратпăр.

Суйлав участкин пӳлĕмĕсене лозунгсемпе, плакатсемпе, çулпуçсен сăнĕсемпе илемлетнĕ. Суйлав комиççи пӳлĕмĕнче кашни кунах дежурнăйсем пулаççĕ. Кунта суйлавçăсем тĕрлĕ ыйтусемпе пыраççĕ. Ыйтусем çине ответсем пама справочнăй бӳро организациленĕ. Кунтах радио лартса панă, патефон, хаçат-журнал, кĕнеке. Унтах стена хаçачĕ тухса тăраť. Çавăнпа та суйлавçăсем комиççи пӳлĕмĕнчен таталмаççĕ. Вĕсем радио итлеççĕ, хаçат вулаççĕ т. ыт. те. Пĕтĕм ĕçе план тăрăх туса пыратпăр.

Суйлав пӳлĕмĕсене туса лартнă. Унта сĕтел-пукан, чернилљницă, ручкă, пурне те хатĕрленĕ. Суйлавçăсен спискинче пулнă йăнăшсене тӳрлетсе тухнă. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче суйлав кунĕ пуласси çинчен урамсенче пĕлтерӳсем çапнă, колхозниксене те пĕлтернĕ. Пирĕн суйлавçăсем кама суйламалине пĕлеççĕ. „Епĕр Чкалов, Стецкий, З. Андрейева йулташсемшĕн сасăлатпăр“, теççĕ вĕсем.

Суйлав умĕн

(Красноармейец çырăвĕ)

Пĕтĕм аслă çĕршывпа пĕрле Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ те ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали куна—декабĕрĕн 12-мĕшне хатĕрленет. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем çак историлĕ куна çар ĕç техникине вĕренес ĕçре тата политикăла вĕренӳре пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ.

Командирсемпе политработниксем пуринчен ытла çара кăçал килнĕ красноармейецсемпе нумай ĕçлеççĕ. Вĕсем кăçал килнĕ красноармейецсене Хĕрлĕ Çар пурнăçĕпе паллаштарчĕç, вĕренӳ çулĕ тĕлне кашни бойеца уйрăмăн хатĕрлесе çитерме, çар ĕç вĕренӳвĕнчи малтанхи пĕлӳсене пама тăрăшрĕç. Вĕсем тăрăшнипе чаçсем, подразделенисем вĕренӳ çулне пур йенчен те хатĕрлесе çитнипе пуçларĕç.

Красноармейецсемпе командирсем тата политработниксем ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали куна тулли хаваслăхпа кĕтеççĕ.

Красноармейецсемпе командирсем тата политработниксем хăйсен кандидачĕсемпе — Националѣнăçсен Советне суйлама кандидата тăратнă Совет Сойуз Геройĕпе—Сергей Прокофйевич Денисов йулташпа, Сойуз Советне суйлама кандидата тăратнă Бобруйскри Сталин йачĕпе тăракан завод директорĕпе—Иван Семйонович Коровин йулташпа тĕл пулчĕç. Кандидатсем суйлавçăсене хăйсен автобиографийĕсене каласа пачĕç, ĕçĕсемпе паллаштарчĕç. Тĕлĕнмеле чаплă пулчĕ ку тĕлпулу! Вăл красноармейецсен политикăла активлăхĕ пысăккине, вĕсем партипе совет правителствине чĕререн йуратса тăнине кăтартса пачĕ.

Казармăсенчи ленинла кĕтессенче халĕ кунĕн-çĕрĕн ĕç вĕрет. Унта красноармейецсем Сталинла Конституцине, „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ вĕренеççĕ, хаçат-журналсем вулаççĕ, суйлав кунĕ тĕлне йатарласа тунă витринăсемпе паллашаççĕ, ăнланман ыйтусем тăрăх консултаци илеççĕ т. ыт. те.

Красноармейецсемпе командирсем тата политработниксем нумайĕшĕ çывăхри колхозсенче пропагандиссем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен пĕлӳвĕсене тĕмиçе пин колхознике параççĕ, кашни ĕççыннине суйлав кунне хатĕрлесе çитерме тăрăшаççĕ.

Сталинла Конституцин 138-мĕш статйинче Хĕрлĕ Çарта пурăнакан граждансен суйлав прависене ылтăн сăмахсемпе çырса хунă. Ку статйа тăрăх Хĕрлĕ Çарта тăракансем ССР Сойузĕн Аслă Советне совет çĕршывĕнчи пур граждансемпе танах суйлама тата суйланма та пултараççĕ. Красноармейецсем хăйсен аслă прависемшĕн, Сталинла Конституцишĕн кама тав тумалине пĕлеççĕ. Вĕсем савăнăçлă пурнăçшăн халăхсен çулпуçне аслă Сталина тав тăваççĕ. Вĕсем тăван çĕршыва тăшмансенчен сыхлама, совет халăхĕн ăнăçлă ĕçне сыхлама кирек хăш минутра та хатĕр. К. Сергейев

Белоруççи.

Тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем

Нойабĕрĕн 23-мĕшĕнче Франци республикĕн шалти ĕçсен министерстви Францире фашисла заговор тупса палăртни çинчен официалнă пĕлтерне. Çак пĕлтерӳре чăн-чăн заговора тытнă, вăрттăн ĕçлекен организаци пуррине палăртнă, ăна çар организацисем пек йĕркеленĕ тесе каланă. Çак организацин кадрĕсене дивизисем, бригадăсем, полкăсем тата баталйонсем тăрăх вырнаçтарса тухнă. Организаци хăй умне республикăна пĕтерсе **фашисла диктатурă** тăвас задача лартнă.

Вăрттăн ĕçлекен фашисла организацин çар хатĕрĕсен пысăк склачĕсем, çĕр айĕнчи телефон станцисем, çĕр айĕнчи касаматсем, санитари служби пулнă. Фашисла организацин çурчĕсенче ухтарнă чухне полици çар чаçĕсен вăрттăн документĕсем, фалшивăй бланксем, революцилĕ тата республикăлă организацисене йертсе пыракансен спи кисем тупнă. Фашиссем революцилĕ тата республикăлă организацисене йертсе пыракансене малтанхи сигнал пулсанах вĕлерме тĕллесе хунă.

Фашиссен вăрттăн ĕçлекен терорла организаци „Лига тайной обороны“ йатлă пулнă. Унта йачĕшĕн салатса йана, анчах чăннипе ытти йатсемпе ĕçлекен фашисла лигăна ушкăнсем пĕрлешсе тăнă. Полици заговорщиксем хушшинче чылай çынсене арĕслене, анчах заговоран чăн-чăн пуçлăхĕсем халĕ те ирĕкрех-ха. Арĕсленисем хушшинче: инженер Делонкл, генерал Дйусенйер, герцог Поццо ди Борго йӳрăмах паллă вырăнта тăраççĕ.

Генерал Дйусенйер пĕр вăхăтра авиаци министрĕн канцелљари начальникĕ пулнăскер, „Лига тайной обороны“ организацин пуçĕнче тăнă. Делонкл фашисла террориссене хĕçпăшал тăратаканни пулнă. Герцог Поццо ди Борго, реакционер Дардйепе çыхăннăскер, „Лигăра“ аристократи тата шултăра капиталиссен представителĕ пулнă.

Заговор чăннипе пысăк пулнине çакăнтан курма пулаť. Париж хулин Рибер урамĕнчи вăрттăн складра кăна 500 пулемет, 100. пин патрон, темĕн чухлĕ гранат, револвер тата ытти çар хатĕрĕсем тупнă. Çакнашкал складсем Парижре çеç мар, провинцисенче те нумай пулнă.

Çакнашкал заговор организацине тытса тăма укçа-тенкĕ нумай кирлĕ пулни паллă. Ăçтан тупнă-ха вĕсем çак укçа-тенкĕне? Заговора Франци капиталисĕсем укçа-тенкĕ парса тăнă. Пысăк фабрикант пулнă, паллă фашист Коти çурчĕн айĕнче вăрттăн ĕçлекен телефон станци те ăнсăртран пулман. Заговора Францири пысăк промышленниксенчен пĕри де Вандел та хутшăннă. Çапла ĕнтĕ фашисла заговорщиксем финанс тата промышленнăç хуçисемпе тачă çыхăнса ĕçленĕ.

Ку çеç те мар. Фашисла террориссен вăрттăн склачĕсенче тупнă хĕçпăшалсем, пуринчен ытла Германипе Италире тунăскерсем. Заговор йĕррисем Римпа Берлина илсе кайаççĕ.

Францире вăрттăн ĕçлекен фашисла организацине тупни хăруша сигнал. Вăл Франци реакцийĕ халăх фронтне хирĕç кĕрешме пăрахманнине кăтартаť. Фашисла заговора тупса палăртни урăххи çинчен те калаť: Италипе Германи фашисăмĕ Францире те, Испанири пекех, фашисла пăлхав тума хатĕрленнĕ. Франци фашисĕсем троцкиссемпе, Германипе Итали фашисăмĕн агенчĕсемпе пĕрле пулнине халĕ палăртса тăрă шыв çине кăларнă.

* * *

Францире тупса палăртнă фашисла заговор вăрçă пуçласшăн çунакан Германипе Итали фашисĕсен тискер планне пĕтĕм тĕнче умĕнче тăрă шыв çине кăларчĕ. Çак заговор çинчен халĕ пĕтĕм тĕнче, çав шутрах Англире те хытă калаçаççĕ. Анчах Англири реакцилĕ пичет (консервативлă хаçатсем: „Обсервер“, „Сендей Таймс“ тата ыттисем) çав тупса палăртнă фашисла заговор хăрушă мар тесе кăтартма хăтланаť.

Нумай пулмасť Берлинран Англи правителствин членĕ Лорд Галифакс таврăннă, вăл унта Гитлерпа, Герингпа, „Виççĕмĕш империн“ тата ытти руководителĕсемпе калаçнă Англи хаçачĕсем: Лорд Галифакс Германийе хăйĕн ĕçĕпе кайнă тесе кăтартма хăтланчĕç пулсан та, вăл Гитлерпа тата фашисла ытти руководителсемпе калаçнă чухне сӳтсе-йавнă ыйтусем пысăк ыйтусем. Англи хаçат-журналĕсем çырса пĕлтернĕ тăрăх, Лорд Галифакс Германире мĕнле ыйтусем тăрăх калаçнине ăнланма йывăр мар. Сăмах фашисла Германине тĕпри тата Хĕвелтухăç Йевропăра мĕнле условисем тăрăх ирĕк парасси çинчен пынă.

Фашисла Германи çакнашкал ыйтусем кăларса тăратнă: 1) Англи Австрин халхи правителствипе дипломати тĕлĕшĕпе те, политика тĕлĕшпе те, çар вăйĕпе те пулăшмасť тесе обйазателствă параť. Чăннипе каласан, ку вăл—Австрийе туртса илме Англи Германийе чăрмантармасť тенине пĕлтерет.

2) Англин Чехословакине федерацилĕ тума килĕшмеле, çак федерацире Чехословакин нимĕç халăхĕсем пурăнакан, Судет текен пайне пĕтĕмпех автономи памала. Çакна конкретлă чĕлхе çине куçарсан, вăл—Германийе Чехословаки çине тапăнма Англин чăрмантармала мар тенине пĕлтерет.

3) Англин Франко генерал „правителствине“ йышăнмала. Ку вăл—Англин республикăлă Испанийе çапса аркатма пăлхавçăсене пулăшмала тенине пĕлтерет.

Çаксемшĕн Германи ĕлĕк хăйĕн пулнă колонисене кайала тавăрса парас ыйтăва 6 çул малала тăсма килĕшет. Анчах вăл 6 çул иртсен каллех çак ыйтăва кăларса тăратмала. Лигă наци уставĕнче санкци çинчен (мирлĕ саманана пăсакансене хирĕç репреççилĕ мерăсем) калакан пунктсене кăларса пăрахсан, пĕчĕк халахсен прависем çинчен калакан договорсене тепĕр хут пăхса тухсан, Англи Италин Абиссинири „прависене“ йышăнсан—Германи Лигă нацине каллех члена кĕме килĕшет.

Берлинра çак ыйтусем тăрăх калаçнине çак фактсем тăрăх та курма пулаť: Галифакспа калаçнă хыççăнах Гитлер Аугсбургра сăмах тухса калама васкана, унта вăл Германи ĕлĕк хăйĕн пулнă колонисене кайала тавăрас ыйтăва 6 çуллăха хăвараť тесе каланă. Берлинри калаçусем çинчен Францийе пĕлтермен. Англи правителствин пуçлăхĕ Чемберлен Берлинра Лорд Галифакспа мĕн çинчен калаçни çинчен парламент ларăвĕнче те каласа кăтартман.

Халĕ Англи правителстви Франци правителстви пуçлăхне Шотана, йутçĕршыв ĕçĕсен министăрне Делбоса—Лондона пыма чĕннĕ. Çакă вăл—Англи Германипе пĕрле Франци шучĕпе килĕшсе таталма хăтланнине кăтартаť. Фашисла Германи умĕнче кайала чакнипе Англи хăйне хăрушăсăр пурăнмала тăвасшăн, хăйĕн интересĕсене сыхласа хăварасшăн, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче хăйне ирĕк тăвасшăн.

Çак суккăр политикă, чи малтан, Англишĕн хăйшĕн хăрушă пулни паллă. Вăл фашисла Германи Англин Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи тăшманĕпе—Йапонипе вăрçă сойузĕ тунине манна пек, йе манасшăн. Испанире агрессорсем умĕнче чакса пынă политикă Вăтаçĕр тинĕс урлă кайакан Англин çыхăну çулйĕрне хăрушлăх патне илсе пычĕ. Англи Йапони умĕнче чакса пынипе Йапони Çурçĕр Китайа туртса илчĕ, Шанхайа туртса илчĕ, Йапони империалисĕсем Шанхайра хуçа пулса тăраççĕ, англичансемпе американцăсене Шанхайран хĕссе кăлараççĕ.

* * *

Англи капиталисĕсем фашисла Германипе килĕшме тăрăшнă, Германи умĕнче пĕрмайах чакса пынă вăхăтра, „Виççĕмĕш импери“ çĕршывĕнче лару-тăру економикă тĕлĕшĕнчен те, политика тĕлĕшĕнчен те питĕ хытă йывăрланса пыраť. Çĕршыван пурнăçĕ йывăрланса пынине халăх хуçалăхĕн министрĕ Шахт отставка тухни те лайăх кăтартса параť. Çак отставкă çинчен тахçанах сăмах сарнă, анчах, „Виççĕмĕш импери“ хаçат-журналĕсем йутçĕршывсенче урăхла шутлĕç тесе, çав сăмахсем тĕрĕс мар тесе çырнă. Пуриншĕн те паллă, Шахт Герингпа килĕштермен пирки отставка тухнă, Геринга „тăватă çуллăх планне“ пурнăçа кĕртмели правителствă уполномоченнăйĕ туса хунă.

Шахт чĕрĕ таваран тĕрлĕ суррогачĕсене тăвас ĕçе укçа-тенкĕ нумай хурассине, вăл експорта сахаллатассине хирĕç, кĕскен каласан Геринг вăрçа хатĕрленес тĕлĕшпе тытса пыракан хăвăртлăха хирĕç тăнă. Шахт халĕ Германи вăрçа çавăн пек хыпаланса хатĕрленме вăй çитерейместь, çавăнпа та вăрçа хатĕрленес хăвăртлăха кăштах йăвашлатмала тесе шутланă.

Шахт отставка тухни икĕ йапалана кăтартса параť: 1) Фашисла Германин пурнăçĕ çав тери начарланса çитнĕ; 2) Германи фашисĕсем нимĕне пăхмасăр експлоатацине тата вăйлатса, налогсене ӳстерсе, çĕршывăн ахал те пĕтсе çитнĕ рессурсине пĕтерсе пырса вăрçа хатĕрленес ĕçе васкатма килĕшнĕ.

Çапла ĕнтĕ Германири халăхсен пурнăçĕ малашне тата ытларах начарланса пыраť.

* * *

Капиталисăмла тĕнче хăрушă вăхăтра пурăнаť. Пур çĕрте те вăрçа урса кайсах хатĕрленеççĕ. Испанири интервенци, Китайри вăрçа—çаксем, вĕсем фашисла агрессорсем тĕнчене вăрçа çавăрса кĕртме ĕмĕтленекен тискер ĕçсем. Çаксем çумне **çывхарса килекен економикăла çĕнĕ кризис хутшăнаť**. Çак кризис Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене çывăхах пырса кĕчĕ ĕнтĕ. Йулашки сведенисем Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче хурçă шăратакан промышленнăç продукцийĕ питĕ хытă чакни çинчен калаççĕ. „Хурçă шăратакан промышленнăç,—тесе çыраť „Анналист“,

Пумпур, Краснов, Чкалов йулташсемшӗн сасӑлар

Пӑва йалӗнче (Вӑрнар р.) 1930 ҫулта колхоз организациленчӗ. Революци пулни ҫирӗм ҫул тултарнӑ ҫӗре Пӑвайал пуйан та культурлӑ ҫул ҫине тухрӗ. Революци пуличчен Пӑвайалӗнче вӗренне ҫынсем питӗ сахал пулнӑ, вӗреннӗ пулсан та церковно-приходской шкулта анчах вӗренне. Земский шкулта Кӗҫӗн Кипекре 3 ача вӗренсе тухнӑ, Йӑнгорчинта 1 ача вӗренсе тухнӑ, пӗтӗмпе те земский шкултан 4 ача анчах вӗренсе тухнӑ. Вӗсем те пимӗнле ӗҫре те ӗҫлеме пултарайман. Халӗхи вӑхӑтра аслӑ шкулсенчен вӗренсе тухса 3 инженер, 1 профессор, 3 тухтӑр ӗҫлеҫҫӗ. Вӑтам шкулсенче вӗренсе тухса тӗрлӗрен ӗҫсенче ӗҫлекенсем: учителсемпе агрономсем, фельдшерсем 12 ҫын. Пайанхи куна илҫессӗн, аслӑ шкулсенче вӗренекенсем 5 ҫын, вӑтам шкулта 52 ача вӗренеҫҫӗ. Ку пирӗншӗн тата пирӗн ачасемшӗн питӗ пысӑк савӑнӑҫ. Ҫакӑ пысӑк савӑнӑҫа пире Сталин йулташ пачӗ. Ҫавӑнпа та ҫак ҫитӗнӳсене шута илсе, малашне те пирӗн пурнӑҫ тата лайӑхрах пурӑнмала пултӑр тесе, епӗр Аслӑ Совета хамӑрӑн чи шанчӑклӑ ывӑлсене, совет власне чӗререн парӑннӑ ҫынсене, тӑван ҫӗршыва, кӑсшӑршине пӑхса усранӑ пек, сыхлакан йулташсене суйлатпӑр. Епӗр Пӑвайал суйлав участкинче Совет Сойузӗн Геройӗ Петр Иванович Пумпур йулташшӑн тата Ҫӗмӗрле округӗнче регистрациленӗ Андрей Михайлович Красновшӑн, Горький округӗнче регистрациленӗ Совет Сойузӗн Геройӗ полковник Валерий Павлович Чкаловшӑн хамӑр сасса паратпӑр. Пумпур, Краснов, Чкалов пурнӑҫсемпе епӗр лайӑх паллашнӑ. Вӗсемшӗн сасӑлатпӑр.

И. Кораков.

Л. С. Спасов йулташ суйлавҫӑсем патӗнче

ШӐМӐРШӐ, Декабӗрӗн 3-мӗшӗ (телефон тӑрӑх). Шӑмӑршӑра суйлав умӗнхи митинг пулса иртрӗ. Митинга 3000 ҫын пухӑнчӗҫ. Митингра ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн Сойуз Советне депутата суйлама Улатӑр суйлав округӗ тӑрӑх регистрациленӗ кандидат Л. С. Спасов йулташ пулчӗ, вӑл пысӑк сӑмах тухса каларӗ.

Л. С. Спасов йулташ хыҫҫӑн орденоносец Капчиков тата „Динамо" колхоз председателӗ Кудрйашов йулташсем тухса каларӗҫ. Епӗр, Шӑмӑршӑ районӗнчи суйлавҫӑсем, хамӑрӑн сасӑсене Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн, ӗҫҫыннисен телейлӗхӗшӗн, тӑван ҫӗршывӑн хӑвӗлӗпе мухтавлӑхӗшӗн пӗтӗм вӑйпа кӗрешекен, социалисӑмла ҫӗршывӑн шанчӑклӑ ывӑлӗсемшӗн—В. П. Чкалов, Л. С. Спасов тата О. Т. Харитонова йулташсемшӗн сасӑлатпӑр,—терӗҫ вӗсем.

Хут пӗлмен ҫын пулмаст

„Хӗрлӗ Герой" колхозра (Ҫӗрпӳ районӗ, Пуашкасси йалсовечӗ) суйлав саккунне вӗренме виҫӗ кружок организациленӗ.

Декабӗрӗн 12-мӗшӗ тӗлне колхозра хут пӗлмен ҫын йулмаст. Вӗсене вӗрентме уйрӑм кружок йӗркеленӗ. Кружок авӑн ӗҫлет.

ССР СОЙУЗӖН АСЛӐ СОВЕТНЕ СУЙЛАНӐ КУН

МӖНЛЕ САСӐЛАМАЛА

1 ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйланӑ кун суйлавҫӑ хӑй ирхине 6 сехетрен пуҫласа ҫӗрле 12 сехет ҫитиччен хӑйӗн суйлав участкине каймала. Хӑйпе пӗрле паспорт, йе колхоз кӗнеки, йе профсойуз билечӗ, йе камне пӗлтерекен урӑхла документ илсе пымала.

2 Ҫав документа суйлавҫӑ участкӑри суйлав комиҫҫи секретарне суйлавҫӑсен спискинче паллӑ тума кӑтартать.

3 Суйлавҫӑсен списки тӑрӑх тӗрӗслесе пӑхсан тата суйлавҫӑсен спискинче паллӑ тусан суйлавҫӑ суйлав бӳллетенӗсем тата ҫирӗплетнӗ образецлӑ конверт илет.

4 Суйлав бӳллетенӗсене тултарма уйӑрнӑ пӳлӗме кӗрсе суйлавҫӑ кашни суйлав бӳллетенӗнче хӑй хӑш кандидатшӑн сасӑлас тет, ҫавӑн хушаматне хӑварать.

5 Суйлавҫӑ бӳллетенсене конверт ӑшне чиксе конвертне ҫыпӑҫтарса хурать.

6 Суйлавҫӑ участкӑри суйлав комиҫҫи вырнаҫнӑ пӳлӗме кӗрсе суйлав бӳллетенӗсем чикнӗ конверта суйлав йешчӗкне йарать.

Пурте вунӑкунлӑха хутшӑнӑр

Мускаври Сталинский районри предприйатисенчи рабочисем Сталин йулташ ССР Сойузӗн Аслӑ Советне депутата суйланма хӑйсен округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшнине хапӑлланса, декабӗрӗн 1-мӗшпе 10-мӗш хушшинче стахановла рекордсен вунакунлӑхне иртерме йышӑнчӗҫ. Ку шыха та чапла пуҫару пӗр самантрах пӗтӗм ҫӗршыв тӑрӑх саралчӗ. Предприйатисенчи, строителствӑсенчи рабочисем, инженерла-техникла работниксем тата служащисем суйлав кунне пысӑк ӳсӗмсемпе кӗтсе илессишӗн кӗрешӗве тухрӗҫ. Вӗсем хӑйсен суйлав умӗнхи канашлӑвӗсенче хӑйсем ҫине тата̌кла обйазателствӑсем илчӗҫ.

Улатӑр районӗнчи предприйатисенчи, колхозсенчи суйлавҫӑсен нойабӗрӗн 25-мӗшӗнче пулса иртнӗ канашлӑвӗ Сталин патне ҫырнӑ ҫырура суйлав кунне пысӑк ҫӗнтерӳсемпе кӗтсе илессишӗн кӗрешӗве тухни ҫинчен пӗлтерет. Вӑрнарти фосфорит заводӗнчи Крыжков йертсе пыракан стахановецсен бригади ҫулталӑк планне декабӗрӗн 12-мӗшӗнче тултарма пулчӗ. Йӗпреҫ вӑрманпромхозӗнчи стахановец Воронов йулташ октйабӗрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа апрелӗн 1-мӗшне ҫитиччен лучковӑй пӑчкӑпа ӗҫлесе 1.100 кубла метр касса хатӗрлеме пулчӗ.

Социалисӑмла ӑмӑрту халӗ ҫене вӑйпа саралса пырат. Ӑмӑртува хутшӑннӑ рабочисем кунран кун ҫӗнӗ ӳсӗмсем туса пыраҫҫӗ. Ҫӗмӗрлери „Большевик" заводри рабочисем суйлав кунне хатӗрленнӗ май, ҫулталӑкри плана нойабӗрӗн 28-мӗш тӗлне тултарчӗҫ. Комбинатри торцовальнӑй станок ҫинче ӗҫлекен Сыромйатникова йулташ иртнӗ уйӑхсенче нормӑна 150 процентшар тултарса пына пулсан, халӗ 200 процентран кайа мар тултарат. Нойабӗрӗн 26-мӗшӗнче Сыромйатникова йулташ хӑй комбината кӗнеренпе туман ҫӗнтерӳ турӗ. Ку кун вӑл нормӑна 322 процент тултарчӗ.

Йуҫкасси шкулӗнче

ЕЛӖК. Йуҫкасси вӑтам шкулӗнче вӗренекенсем вӑхӑта савӑнӑҫлӑ та усӑлӑн иртереҫҫӗ. Шкулта темиҫе тӗрлӗ кружок ӗҫлет. Кӑҫал драмкружок „Йалта", „Улшӑннӑ самана" пйесӑсене лартса пачӗ. „Йалта" пйесӑна колхозниксем ыйтнипе Патаккасси йалне кайса лартса панӑ. Спектакльсенче Й. Герасимов, М. Илларионова, В. Буковинина, И. Маркелов, В. Владимиров йултешсем лайӑх вылйаҫҫӗ.

Хор кружокне А. Иванов учител йертсе пырат. „Песня о Сталине", „Песня о родине", „Молодость", „Конвоармейская", „Жить стало лучше..." йатлӑ ҫӗнӗ йурӑсене вӗреннӗ.

Класра уроксем пӗтнӗ хыҫҫӑн, вӗренекенсем хаҫат-журналсем вулаҫҫӗ, шашкӑ-шахмӑтла вылйаҫҫӗ. Шкул дирекцийӗ икӗ ӗретлӗ хуткупӑс туйанчӗ, радио кӳртрӗ.

Ив. Кутузов.

питӗ кайала чакса пырат". Чӑн та, август уйӑхӗнче те ҫак промышленнӑҫӑн производствӑлӑ пултарулӑхӗпе 84 процент ҫеҫ усӑ курнӑ, нойабӗрте 36 процент ҫеҫ усӑ курнӑ.

Промышленнӑҫ предприйатисен акцисем питӗ нумай йӳнелнӗ. Производствӑ чакнӑ май рабочисене ӗҫрен нумай кӑлараҫҫӗ. Америкӑри хаҫат-журналсем ҫак ҫул пӗтиччен ӗҫсӗр тӑрса йулнисен шучӗ пӗр мӗлйун ҫын ытла ӳсет тесе шутлаҫҫӗ.

Ҫывхарса килекен кризис характерӗ ҫинчен халӗ калама йывӑр. Вӑл 1929 ҫулхи пек пӗтӗм тӗнчене ҫавӑрса илӗ тесе калама ҫук. Кӑҫал кӗркунне Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче биржӑсем саланса кайсан, Лондонри биржӑсенче укҫа-тенкӗ питӗ йӳнелни питӗ паллӑ. Нойабӗрӗн 22, 23-мӗшӗсенче Лондӑнри биржӑсенче пур хаклӑ хутсен хакӗ питӗ йӳнелнӗ. Промышленнӑҫӑн шултра отраҫлисен акцисем 25—30 процент йӳнелнӗ. Англири хаҫатсем 1929 ҫултан пуҫласа биржӑ ҫакнашкал катастрофӑ курман тесе ҫыраҫҫӗ. „Дейли геральд" хаҫат 1937 ҫулта промышленнӑҫ акцисем йӳнелнӗ пирки пурӗ 2,5 мӗлйард кӗренке стерлинг тӑкак пулнӑ тесе ҫырса пӗлтерет.

Ҫӗнӗ кризис ӗҫҫыннисене тӳсме ҫук чухӑнлӑх парат. Капиталисӑмла тӗнчере саралса пыракан тӗксӗм хушшинче Совет Сойузӗ ҫутӑ майак пек ҫутӑлса тӑрат. Совет Сойузӗн халӑх хуҫалӑхӗ пӗрмайах ӳссе пырат, социалисӑмӑн аслӑ ҫӗршывӗнче пурӑнакан халӑхсене ырӑ пурнӑҫ туса парат, ҫав телейлӗ халӑхсем халӗ Сталинла Конституци тӑрӑх ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйлама хатӗрлеҫҫӗ.

Ив. Викторов.

А. Йурин

Чиркӳ ҫыннисем тата сектантсем фашисӑм службинче*)

II.

Йулашки вӑхӑтра йутҫӗршывсен разведкисем православнӑй чиркӳ ҫыннисем хушшинчен агентсем пухас тӗлӗшпе ҫӗнӗ мелсемпе ӗҫлеме пуҫланӑ. Православнӑй чиркӳ ҫыннисен йертсе пыракан пайне Римри папӑран пулӑшу пама пулса, вӗсем ҫавсенчен иезуитсен тата доминиканецсен вӑрттӑн ушкӑнӗсене тунӑ, ҫав ушкӑнсем шпионаж тата террор тума хатӗрленнӗ.

Ҫавӑн пек ушкӑна ССР Сойузӗн центрти пайӗнчи пӗр хулара тунӑ пулнӑ. Ушкӑн пуҫӗнче католике „куҫарнӑ" православнӑй йепископ Ф. тӑнӑ. Вӑрттӑн иезуитсен ҫав ушкӑнӗ совет государствин руководителӗсене хирӗҫ террорла актсем тума хатӗрленнӗ.

Сектантсен проповедникӗсемпе вӗсене пулӑшакансем те, совета хирӗҫ шухӑшлӑскерсем, контрреволюцилӗ ӗҫсем туса пыраҫҫӗ.

Сектантсен проповедникӗсем—йевангелистсем, бабтистсем тата адвентистсем пӗр йутҫӗршыв резведкин заданийӗ тӑрӑх Ҫӗпӗрте фашисла организаци тунӑ, вӑл Германи тата Йапони валли шпионла ӗҫсем туса тӑнӑ. Ҫав организацин руководителӗсенчен пӗрийӗ—сектантсен проповедникӗ Ч. йутҫӗршыв дипломати службин агӗнчӗсемпе тӳрремех ҫыхӑнса тӑнӑ, вӗсенчен шпионла ӗҫсем тума заданисем илнӗ.

Бабтистсем тата йевангелистсем тепӗр фашисла ушкӑна Ӑтӑл тӑрӑхӗнче тунӑ. Ҫав ушкӑн пуҫӗнче тӑнӑ „проповедниксем" хӑйсен „тӑванӗсене"—арҫынсене тата хӗрарӑмсене—кашни уйӑхрах член укҫи тӳлеттернӗ. Ушкӑнра тӑнисем вӑрҫӑ пулсан парӑнмала, тесе агитаци тунӑ. Вӗсем улталаса, ултавпа ирӗксӗрлесе та та хӑратса ҫамрӑксене хӑйсен ушкӑнне кӗртнӗ.

Толстовецсен сектин руководителӗсем Ҫӗпӗрте тата ытти вырӑнсенче те Хӗрлӗ ҫара служба̌на кайассине хирӗҫ тата колхоз строителствине хирӗҫ агитацилӗсе контрреволюцилӗ ӗҫсем туса пынӑ. Толстовецсем йутҫӗршывсене ССР Сойузӗнчи лару-тӑру ҫинчен елеклӗ материалсем йарса тӑнӑ, унти буржуалӑ тата фашисла хаҫатсем ҫав материалсене хавасланса пичетленӗ.

Сектантсем, вӗсем контрреволюцилӗ ӗҫсем туса пынине, хӑйсем патне пухӑнӑ ҫынсене труках кӑтартмаҫҫӗ. Ҫавна вӗсем майӗпен туса пыраҫҫӗ. Рйадовой сектантсем хӑйсен проповедникӗсен ӗмӗчӗсемпе тӗллевӗсем ҫинчен уҫҫӑн пӗлсе ҫитсенех, вӗсенчен хӑвӑртрах уйӑрӑлма, ӗҫҫыннисем хушшине таварӑнма тӑрӑшаҫҫӗ. Вара ҫав фашисла-тӗнле организацисен руководителӗсем хӑйсем хыҫҫӑн пыракансене хӑратма пуҫлаҫҫӗ, вӗсем террор тума та чарӑнса тӑмаҫҫӗ. Епӗр малала „христоса йуратакан проповедниксен" ӗҫӗн ҫав йенне кӑтартакан ӗҫ ҫинчен каласа паратпӑр та.

Киров облаҫӗнче „скрытниксем" текен сектантсен ушкӑнӗ пулнӑ. Ҫав ушкӑнӑн пуҫӗнче усал контрреволюционер Зырйанов, контрреволюцилӗ ӗҫсем тунӑшӑн икӗ хут суд умӗнче пулнӑскер, хупса лартнӑ ҫӗртен тарнӑскер, тӑнӑ. Зырйанов, хӑй хыҫҫӑн пыракансене вӗлерессипе хӑратса, вӗсене пурӑнма вӑрмана, землйанкӑсене куҫарнӑ. Анчах часах ҫав сектантсем пурте Зырйанов мӗнле ҫын иккене чухласа илнӗ. Вӗсем контрреволюцилӗ проповедникрен уйӑрӑлса кайса, колхоза кӗме решени йышӑннӑ. Зырйанов ун ҫинчен пӗлнӗ. Вӑл сектантсене иккӗшне вӑрттӑн ҫӗрте тӗл пулса вӗлернӗ, ҫавна туса ыттисене те хӑратса ӳкересшӗн пулнӑ.

Чиркӳ ҫыннисемпе сектансем контрреволюцилӗ ӗҫсене суйлав кампанийӗ май уйрӑмах вӑйлӑ сарса йанӑ. Вӗсем хӑйсем умне ҫакӑн пек задачӑ лартаҫҫӗ—халӑх суйласа лартакан ҫынсен авторитетне пӗтерес, теҫҫӗ, чылай ҫӗрте тата обществӑлӑ организацисен пухувӗсенче хӑйсен кандидачӗсене тӑратма та хӑтланаҫҫӗ. Чиркӳ ҫыннисемпе сектантсем ҫав ӗҫе тума советсен суйлавӗ пуҫланиччен пӗр ҫул малтан тытӑннӑ. Вӗсем, суйлав кампанийӗпе хӑйсене кирлӗшӗн усӑ курас тесе, темӗн те пӗр тума та чарӑнса тӑмаҫҫӗ.

Армавир хулинче чиркӳ ҫыннисен фашисла организацийӗ пулнӑ, унӑн пуҫӗнче помещик пулнӑ С. тӑнӑ. Фашиссемпе—чиркӳ ҫыннисем хӑйсем умне советсене хӑйсен кандидачӗсене тӑратас задачӑ лартнӑ. Ҫавна пурнӑҫа кӗртме, С. тата унпа пӗр шухӑшлисем суйа кооперативлӑ ертелсем тума тытӑннӑ, ҫав „ертелсен" йачӗпе хӑйсен кандидачӗсене тӑратас, тенӗ вӗсем.

Ҫав организаци ҫакӑн пек программӑ палӑртса хунӑ: 1) „уйрӑм хуҫалӑхлӑ формӑ никӗсӗ ҫинче чиркӳ майлӑ елементсене майӗпен пӗтӗҫтерсе пырас"; 2) „Конституцин 125-мӗш статйи гарантилекен ирӗклӗхсен никӗсӗ ҫинче халӗхи ертелсене, сойузсене тата ытти организацисене те хуҫалӑха уйрӑмӑн тытмали формӑсене кӗртсе пыма тытӑнас; правителствӑн пур учрежденийӗсене те ҫавӑн пек мировоззренишӗн тӑракан кандидатсене кӗртме тӑрӑшас, вӗсене фабриксене, заводсене, шахтӑсене, совхозсене, пӗтӗм орудисемпе тата производствӑлӑ хатӗрсемпе пӗрле, тӳлесе илмели йӗркепе, уйрӑм ҫынсен аллине парассине пурнӑҫа кӗртсе пыма хушас"...

Ҫӗпӗрти православнӑй чиркӳ руководителӗ йепископ Н., Л. тата Ц. попсемпе пӗрле, чиркӳ ҫыннисен совета хирӗҫ ушкӑнне тунӑ. Ҫав ушкӑн хӑйпе ҫывӑх ҫынна—М. попа ССР Сойузӗн Аслӑ Советне депутата суйлама кандидата тӑратма палӑртса хунӑ пулнӑ.

Тамбов облаҫӗнче А. тата М. йепископсем чиркӳ позицийне вӑйлатма тӑрӑшакан контрреволюцилӗ организаци тунӑ. М. йепископ йатарласах „чиркӳве государствӑран уйӑрнӑ декрета ҫӗнӗ Конституци тӑрӑх пурнӑҫа кӗртмели инструкци" те ҫырса хатӗрленӗ. Ҫав документа Совет Сойузӗнче чиркӳве политикӑлӑ правасем памалла тӑвас, тесе хатӗрленӗ.

Ҫав „инструкцин" авторӗ Совет Сойузӗнче чиркӳ вӑл патша Российӗнче, експлоататӑрла классем пуҫпулса тӑрассине вӑйлатма, сарлакан усӑ курнӑ правасемпе привилегийӗсене йаланлӑхах сухатнипе ниййепле те килӗшесшӗн мар мӗн.

Унӑн „инструкцине" Тамбов облаҫӗнчи чиркӳ ҫыннисен вӑрттӑн совещанинче сӳтсе-йавни ӑнсӑртран пулман ӗнтӗ.

Тихоновла чиркӳ йепископӗ А., Воронеж облаҫӗнче ӗҫленӗскер, ССР Сойузӗн Аслӑ Советне кӗрсе кайма ӗмӗтленнӗскер, суйлав кампанийе таҫӑн малтан „хатӗрленме" тытӑннӑ. Вӑл хӑйне пулӑшма темиҫе ҫын — „ырӑ ҫынсене", „светуйлӑскерсене" тупнӑ, вӗсене тӗне ӗненекенсене хӑйшӗн кирлӗ пек вӗрентсе пыма хушнӑ. Ҫав „светуйлӑскерсем" тӗне ӗненекенсене — есӗр йепископ кандидатуришӗн тӑрӑр, тесе чӗнме пуҫланӑ. Ҫавӑн чухне вӗсем—„таса йепископ тӗлӗнмеле ырӑ тӗлӗк курнӑ", тесе, суйа, супӑльти халлап сарнӑ. Паллах, ҫав „ырӑ тӗлӗке" ҫапла ӑнлантарса панӑ—А. йепископ Аслӑ Совета ленкмелех... тенӗ.

А. йепископ хӑйӗн контрреволюцилӗ ӗҫӗсен ерешмен картине пит ӑста карса пынӑ. Совета хирӗҫле тӗрлӗрен провокацилӗ халлапсем сарса, попӑн вӑрӑм тумтирне тӑхӑннӑ тӑшман, вӑл хӑй шухӑшласа кӑларнӑ „тӗлӗк" пурнӑҫа кӗтӗр тесе ҫине тӑрса ӗҫленӗ. Вӑл контрреволюцилӗ ӗҫри хӑйӗн шанчӑклӑ пулӑшаканне, В. попа, ҫитес суйлава вальли платформӑ хатӗрлеме те хушнӑ. В. попа вӑл ҫакӑн пек установкӑсем панӑ: а) „платформӑра чиркӳн историлӗ массине татӑклӑн палӑртмала тата кама суйламали ҫинчен каламала", б) „Платформӑна духовенствӑна суйласси чӑннипех те пулмалах ҫырса хумала", в) „Хамӑрӑн христос тӗнне тытакан тӑвансене ҫакна каламала—советсене рабочисемпе колхозниксене суйлани ан пултӑр тесе духовенствӑ пӗтӗм вӑйне хурӗ, тата турра кӗлтӑвӗ, темеле".

Д. йепископ хушнипе Н. поп Смоленск облаҫӗнче чиркӳ ҫыннисен кулакла ушкӑнне тунӑ. Ҫав ушкӑнӑн тӗп задачи—суйлав кампанине пӑсса тата чӑрмантарса пырасси пулнӑ. Поп, совета хирӗҫ агитаци тунипе тата провокацилӗ халлапсем сарнипе чарӑнмасӑр, вырӑнти активлӑ коммуниссене, совет работникӗсене тата колхозниксене емел парса вӗлерме хатӗрленнӗ. Ҫавна тума поп-ҫынвӗрелен стрихнин тупса хатӗрленӗ...

Смоленскра, рабочисен пӗр ушкӑнӗ, вӑрттӑн монастире уҫса палӑртнӑ, ҫав вӑрттӑн монастыр хулари пӗр чиркӳн подвалти хутлӑхӗнче вырнаҫса пурӑннӑ. Ҫав монастирте вырнаҫнӑ кулаксемпе монахсем хӑйсен духовнӑй начальникӗсен кӑтартӑвӗсене пурнӑҫа кӗртсе пынӑ. Тӗн йӑлисене тытма вӗрентнӗ пек туса, ҫав „затворниксем" советсен суйлавне бойкот тума тата колхозран тухма чӗннӗ.

Чиркӳ ҫыннисем советсене хирӗҫ кӗрешме пур майсемпе те усӑ курма пӑхаҫҫӗ—епӗр йулашкинчен, ҫавна кӑтартса пыракан тепӗр пример илӗпӗр. Мускав облаҫӗнчи пӗр чиркӳлӗ йалти диакон, Тихомиров текенскер, ҫамрӑксем

(Йулашки 4-мӗш страницӑра).

*) Йулашки. Пуҫламӗшӗ 275-мӗш №-те.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн президиумĕнче

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн президиумĕ ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли кампанийĕ Çĕмĕрле тата Патăрьел районĕсенче мĕнле хатĕрленсе пыни çинчен Çĕмĕрле райĕçтăвкомĕн, Мăн Алкаши тата Йегоркинă ялсоветĕсен, Патăрьел райĕçтăвкомĕн, Çĕнĕ Ахпÿрт тата Патăрьел ялсоветĕсен тата Парти Контроль Комиссин представителĕ Охотников йулташăн докладĕсене итлерĕ.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн президиумĕ Çĕмĕрле тата Патăрьел районĕсенче ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленнĕ çĕрте пулнă йанăшсемпе суйлав саккуне пăснине халĕ те пĕтĕмпех тÿрлетсе пĕтерменнине палăртрĕ. Патăрьел районĕнче участкăри суйлав комиссийĕсене хĕсĕнсене кĕнĕ шанчăксăр çынсене халĕ те кăларман; хăшпĕр ялсоветсенче (Кивĕ Ахпÿрт тата Катек ялсоветĕсенче) суйлавçăсен спискисене тирпейсĕр тунă тата вăхăтра курăнмала çĕре кăларса çакман. Суйлавçăсен спискине кĕртмесĕр хăварнине, йатсене, ашшĕ йатне тата хушаматне тата çуралнă çула пăсса çырни çинчен ĕçсыннисен панă жалабăсене вăхăтра пăхса тухмасçĕ. Суйлав участкисен çурчĕсене хатĕрлес ĕç те вăхăтра пулса пымаст. Суйлав участкисенче лампăсем, кравăтсем т. ыт. кирлĕ йапаласем çитеймеççĕ. Патăрьел районĕнче пĕтĕмпе 400 лампă кирлĕ пулсан, 165 кăна хатĕрленĕ. Çыхăну Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи октйабрĕн 21-мĕшĕнче пĕтĕм суйлав участкисене телефонлатасси çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртмен.

Патăрьел районĕнчи Кивĕ Ахпÿрт тата Катек ялсоветĕсем, Çĕмĕрле районĕнчи Мăн Алкаши тата Йегоркинă ялсоветĕсенче суйлавçăсем хушшинче суйлав саккуне вĕренес тата агитацилĕ-массăллă ĕçе халĕ те кирлĕ таран йĕркелесе çитермен. Кивĕ Ахпÿрт ялсоветĕнче ĕçлекенсем „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" хăйсем те пĕлмеççĕ. Суйлав саккунне вĕренесси тата агитацилĕ-массăллă ĕç ударниксемпе йапăлноличниксем хушшинче питĕ начар.

Агитаторсем хăйсен ĕçне тивĕçлипе туса пымаççĕ, хăшпĕр вулав çурчĕсем, клубсем, шкулсем тата хĕрлĕ кĕтессем суйлав саккунне суйлавçăсене вĕрентессипе агитацилĕ-массăллă ĕçсенчен айккинче тăраççĕ. Йегоркинă ялсоветĕнчи (Çĕмĕрле р.) клуб нимĕн те тумаст.

Халăх тăшманĕсем суйлавçăсен спискисене варланă тата çурса пăрахнă (Çĕнĕ Ахпÿрт), Мăн Алгашинче кулакла елементсемпе чиркÿ çыннисем ирсĕр ĕçсем тунă. Избачсемпе агитаторсем хушшинче те агитацилĕ-массăллă ĕçе туса пыма пултарайман тăшманла çынсем пур (Çĕнйал Покровски, Катрас, Ичлей р.). Радиопа усă курмаççĕ. Районри тата колхозсенчи стена хаçачĕсем суйлав кампанине йапăх ĕçлеççĕ.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн президиумĕ Çĕмĕрле, Патăрьел тата пĕтĕм райĕçтăвкомсене суйлавçăсен спискисене тĕрĕслесе тухма, спискăсене тунă çĕрте пулнă йанăшсене йусама хушрĕ.

Суйлавçăсен спискине кĕртменни, хушамата, йата тата ашшĕ йатне пăсса çырни тата ыттисем çинчен те панă граждансен жалабăсене „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенийĕ" кăтартнă срукра пăхса тухмала. Саккуна пăснисене айăпламалла.

Райĕçтăвкомсен кашни суйлав участкинчи суйлав çурчĕсене халех пăхса тухса йышăнса пĕтермеле. Суйлав ирттерме кирлĕ материалсем тата суйлав документчĕсем çителĕклине тĕплĕн тĕрĕслесе тухмала, вĕсене хытă сыхласа усрасса йĕркелемеле.

Вулав çурчĕсен ĕçне халех лайăхлатмала, вĕсене çителĕклĕ таран суйлав литератури, плакатсем, лозунгсем, вутă тата ыттисем те илсе памала. Райĕçтăвкомсен агитаторсен ретне тĕрĕслесе тухмала, суйлавçăсене çĕр процентĕнех суйлав саккуне вĕренме хутшăнтармăла, йăлантарулă тата агитацилĕ-массăллă ĕçĕн пахалăхне ÿстермеле. Суйлав саккуне вĕренессине хамăр республикăри, районри тата колхозри çитĕнÿсене уççăн кăтартса парассипе тата Аслă Совета депутата суйлама палăртнă кандидатсен паха ĕçĕсемпе паллаштарассипе таччăн çыхăнтарса пымала.

Суйлав саккуне йăлантарса пынипе пĕрлех, кулакла елементсен тата чиркÿ çыннисен тăшманла ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса, аркатса пăрахмала.

Шупашкарти стена хаçачĕсем

Нойабрĕн 29-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи предприйатисемпе учрежденисенчи стена хаçат редакторĕсемпе редколлеги членĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлăва хатĕрленнĕ май хулари стена хаçачĕсен выставкине тунă.

Канашлура Тир саран заводĕнчи „Голос кожевника" стена хаçат редакторĕ Аввакумов йулташ отчот турĕ. Вăл каланă тăрăх заводри парторг пулса ĕçленĕ Смирнов стена хаçатне сывă критикăна сарма чарнă. Стена хаçачĕ çинче заводри çитменлĕхсем çинчен çырсан, Смирнов хаçата çĕтсе тăкнă. Стена хаçат редакторне йатласа, вăрçса пĕтернĕ.

„Красный молот" ертелĕре Иван Бронников хăй çинчен çырнă заметкăна краскăпа хуратса хунă. Çакна ертел правлени пĕлнĕ, анчах вăл хаçат редколлегине пулăшас тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Канашлура тухса калакансем партин вырăнти организацийĕсен стена хаçачĕсене куллен пулăшса пымаллине кăтартса парĕç. Парткомсемпе парторгсем предприйатисемпе учрежденисенче, шкулсенче тата стена хаçачĕсем ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли кампанине пысăк вырăн йышăннине айăпласа илмен. Пединститутра кашни кун хаçат кăларма май пур. Анчах кунта кăçал виçĕ номĕр çеç кăларнă. Партком стена хаçат ĕçĕпе интересленмест.

ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама палăртнă кандидатсемшĕн: Чкаловшăн, Стецкишĕн, Андрейевашăн агитацилесе „За советскую торговлю" (Чăваш ойуз, редакторĕ П. Лаврентйев), „За образцовую улицу" (Ленинградский урам, редакторĕ Сешова) хаçатсем лайăх туса пыраççĕ. Çак хаçатсем йулашки номĕрĕсене пĕтĕмпех Аслă Совета суйлама палăртнă кандидатсен ĕçĕсемпе пурнăçĕсене çутатса кăларнă. Хаçатсем илемлĕ.

Чиркÿ çыннисем тата сектантсем фашисăм службинче

(Йулашки)

хушшинче массăлă-культурăлă ĕçе хутшăнассишĕн калама çук çунма тапратнă. Вăл мана, „обшчестволă нагрузкă" йĕркипе, çамрăксем хушшинче харпăрхăй пултарулăх кружокĕсене организацилеме хушăр, тесе сĕнÿ панă. Кайран çакă палăрнă: çав кружоксем Тихомирова советсен суйлавĕнче чиркÿ çыннисен кандидачĕсене тăратма усă курмашкăн кирлĕ пулнă мĕн.

Илсе кăтартнă фактăсенчен акă мĕн курăнса тăрать: чиркÿ çыннисен тата сектантсен руководителĕсем хăйсем пуçарнипе, час-часах тата йутçĕршывсен разведкисем хушнă тăрăх, ĕççыннисене улталаса, совет влаçне хирĕç тăратма пăхаççĕ. Вĕсем тĕн пÿркенчĕкĕпе витĕнсе, улталаса, провокацисем туса, сутăн илсе те ĕçлеççĕ.

Анчах вĕсем суйа пÿркенчĕксемпе тем тĕрлĕ ăста витĕнсен те, вĕсен хура ĕçĕ тĕп пулатех. Рабочи класăн диктатури нихçанхинчен те вăйлă. Вăл, пĕтĕм совет халăхĕн ирĕкне пурнăçа кĕртсе, фашизăсене тара кĕрешнĕскерсене, пур тĕрлисене те совет граждăнĕсен пурнăçне тата телейне тапăнма пăхакансене, пуçĕсенчен çĕмĕрмелех çапать.

„Известия".

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тăшмансем совет сучĕ умĕнче

Декабĕрĕн 2-мĕшĕнчи йăнтăрлахи тата каçхи лару

Декабĕрĕн 2-мĕшĕнче айăпланакан Павловран, Шуловран, Зайковран тата Суриковран допроссем пулса иртрĕç. Айăпланакансем допросра хăйсене пурте пĕр пек тытаççĕ—харпăрхăй айăпне малтан йышăнмасăр тăрса урăххисем çине йама тăрăшаççĕ. Анчах та кун пек „политика" нимех те памаст вĕсене, суд алăнчи материалсемпе прокурор тăратнă фактсене кура, айăпланакансен хăйсен айăпĕсене йышăнмалла пулса тăрать.

Айăпланакан Павлов, выльăх-чĕрлĕх управленийĕн начальникĕ пулса ĕçленĕскер, хăйĕн пĕтĕм айăпне хăйĕнчен аслăрах ĕçре ĕçлекенсем çине тата йăна пăхăнса ĕçленĕ специалистсем çине йама пăхать. Анчах, троцкистсемпе тата ытти тĕрлĕ тăшмансемпе пĕрлешсе ĕçленине нийепле те пытараймасть. Ĕлĕк районĕнчи Матикри сысна ферми пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ троцкиста Павлов йалан хÿтĕлесе тăнă. Григорйевран Павлов хватерĕнче те пулкаланă. Григорйева сысна фермине салатса йанăшăн фермă пуçлăхĕнчен кăларсан, вăл хÿтлĕх шырама тÿрех Павлов патне пынă. Григорйевăна каллех фермă пуçлăхне лартма Павлов чылай майсене шыранă.

Троцкистсемпе çыхăнса ĕçленĕ халăх тăшманĕ Спиридонова Çĕрçе Халăх комиссариатĕнчен ĕçрен кăларса йанă хыççăн, Павлов йăна лайăх ĕçлекен специалист тесе характеристикă панă тата çав характеристикă çине ытти специалистсене те алă пустарнă.

Çапла вара Павлов, выльăх-чĕрлĕх управленийĕн начальникĕ пулса выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнчи сăтăрçăсене, тăшмансене хирĕç кĕрешсе пырас вырăнне, вĕсене хÿтĕлесе, вĕсене сăтăрла ĕçсем тума пулăшса пынă.

Суд умне тепĕр „айăпçă" çын, патша çарĕнче прапорщик пулнăскер тухса тăрать. Вăл—Шулов, пĕр харăс виç çĕрте „çуралăскер". Анкета тăрăх унăн çуралнă вырăнĕ Йĕпреç. Паспарт çинче кăтартнă тăрăх—Чурачăк. Хăй каланă тăрăх—Йĕпреç патĕнчи Кордон.

Ашшĕ унăн революциччен лесопромышленник тата торговец пулнă. 1927 çула çитиччен—шыв арманĕн арендаторĕ. Çавăнпа та Шулов хăйне ашшĕ çулне пыракан çын тесе шутланă, „Племзаготконтора" пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра хăйĕн çине „торгаш" çине пăхнă пек пăхнă.

Шуловшăн пулсан, „Племзаготконтора" урлă республикăна мĕнле выльăх илсе килни, вăл выльăха ăста йани нимĕн те мар. Çавăн пекех выльăхсем чирлĕ йе чирлĕ маррипе те вăл интересленмен. Çавăнпа та вăл „хăйĕн" конторинчи штата выльăх-чĕрлĕх тухтăрĕ илме те шутламан. Уншăн пулсан, колхозниксенчен выльăх укçи пухасси çеç пулнă.

Çапла пулсан та конторăн финанс йĕркине вăл пĕтĕмпех арпаштарса йанă. Финанс дисциплинине пăсса ĕçленипе контора икĕ мĕлйун йахăн государства укçине салатса йанă. Районсенчи уполномоченнăйĕсем пысăк растратăсем тума май панă.

Айакран кÿрсе килнĕ выльăхсенчен сиексен чирĕ чир чиклене выльăхсем сахал мар пулнă. Шулов хушнипе çав выльăхсене карантин тăратса сыватмасăрах колхозсене валеçтернĕ. Карантин организацилесе чирлĕ выльăхсене сыватмалли медикаментсем Шулов патĕнче ăхалех выртнă, „спирт" йатлă „емелпе" çеç Шулов хăй килĕнче усă курма пĕлнĕ.

Шулов çапла сăтăрла ĕçленипе вырăнти выльăхсене лайăхлатас ĕçе пит пысăк сийен кÿнĕ. Кÿрсе килнĕ выльăхсен ăратлăх свидетельствисене çухатса йе арпаштарса пĕтернĕ. Çав свидетельствăсене йури памасăр та тăнă. Конторăра 1694 свидетельствă, районри çĕр ĕç пайĕсенче 3203 свидетельствă саланса выртнă, Вăрнарти зоотехник Шойкин портфелĕнче 1529 свидетельствă саланмасăр йулнă. Мĕнле тата ăста йанă выльăхăн свидетельстви те выртнине те пĕлмеççĕ.

— Ку чăнах та пирĕнтен килнĕ пысăк çитменлĕх,—тесе йышăнать Шулов хăй те йулашкинчен.

Ку вăл пысăк çитменлĕх çеç мар, ку вăл ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пысăк сăтăрлă ĕç пулса тăрать, мĕншĕн тесен çав çитменлĕхе пĕтермесĕр вырăнти выльăх-чĕрлĕхе лайăхлатас ĕçе тĕрĕс çулпа илсе пыма çук.

Шулов та, Павлов пекех, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пĕтĕм сăтăрлă ĕçсене ыттисем çине йама пăхать. Анчах Шулова çапла тăрăшни нимех те памаст, суд алăнчи материалсем Шуловăн сăтăрла ĕçĕсене пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăлараççĕ.

Каçхи ларура Зайковпа Суриковран допрос пулчĕ. Зайков выльăх-чĕрлĕх управленийĕнче сурăх йеннĕпе зоотехник пулса ĕçленĕ. Вăл Дагестанран кÿрсе килнĕ сурăхсем хушшинче чирленĕ сурăхсем пулнă. Унсăр пуçне тата чылай такасен ăратлăх свидетельстви пулман. Пĕр районах тĕрлĕ ăратри такасем йанă. Ĕлĕк районĕнчи Матикри сысна фермине кайсан, фермă йалăкса кайнă пулин те, вăл лайăх ĕçлет тесе суйса кăтартса паспорт çырнă. Фермă пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ троцкист Григорйев фермăра сăтăрла ĕçсем туса пынине пытарса хăварнă.

Суриков—совета хирĕçле ĕçсемшĕн Горькири институтран хăваласа йанăскер, комсомол ретĕнчен сирпĕтнĕскер. Йулашки вăхăтра вăл выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерес йеннĕпе ĕçленĕ. Анчах çак ĕç çине вăл кирлĕ пек çаварăнса пăхман, пĕтĕлентермелли пунктсене тумали плана пурнăçа кĕртмен.

Кунсăр пуçне тата Тăвай районĕнчи Ленин йачĕпе тăракан колхоза пырсан, авгусăн 7-мĕшĕнче вырăнти ăратлă такасене пурне те тытса хуптарса кăстарнă. Çавăн хыççăн йалĕпе 4 така вилнĕ, 100 такана йахăн пусмала пулнă.

Районсене тухсан хăй ĕçне тăвас вырăнне, Суриков йаланах ĕçсе ÿсĕр çÿренĕ. Вăл ăста çитнĕ, çавăнтан ун хыççăн Çĕрçе Халăх комиссариатне Суриков çинчен çырнă жалабăсем килсе тăнă.

М. Костин.

Займ укçине тÿлесе татрĕç

Ĕлĕк районĕнчи Питĕшкасси, Вăçкасси, Тури Йолăш, Антоновка колхозĕсенчи колхозниксем „ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмелли займ" укçине 100 процентĕнех тÿлесе татрĕç. Çав хушăрах йапах ĕçлекен колхозсем те пур-ха. Пизенер, Краклав, Нÿрет, Çĕнкас, Чулкаç, Йанăш, Прошкинă колхозĕсем „ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмелли займ" укçине пĕр пус та пухман.

Ф. Филиппов.

15.500 кĕнеке сутнă

ЙĔТĔРНЕ. Районти суту-илÿ организацисем ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленнĕ май суйлавçăсене Сталин йулташ Советсен Чрезвычайлă 8-мĕш сйесĕнче тунă докладпа ССР Союзĕн Конституцине — 200 екземпляр, М. И. Калинин „Совет влаçĕ—ĕçхалăхне мĕн пачĕ", „Советсем тата суйлав кампанийĕ"—2700 екземпляр, Чăваш АССР Конституцине—700 екз., „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положени"—8700 екземпляр сутнă. Пĕтĕмпе 15 500 кĕнеке сутнă. Ку ĕçре шкулта вĕренекен ачасем те почтальонсем пулăшаççĕ.

Ник. Цветков.

Пайанхи библиотекă

ÇĔРПУ. Ĕлĕк, патша саманинче, уйесри библиотекăра рабочисемпе хресченсене усăллă кĕнекесем пулман, унта пуринчен ытларах тĕн кĕнекисем пулнă. Библиотекăна пупсемпе пуйансем çеç çÿренĕ.

Хальхи пачах урăхла. Совет правительстви халăха çутта кăларас ĕçе нумай укçа-тенкĕ хывать. Хуласенче, фабрик-заводсем çумĕнче, колхозсенче çĕнĕрен çĕнĕ шкулсем, клубсем, библиотекăсем, вулав çурчĕсем усăлаççĕ.

Пирĕн районти библиотекă хăйĕн ĕçне çулран çулах лайăхлатса пырать. Библиотекăра пайанхи кун пурĕ 10.398 кĕнеке. Кунсăр пуçне, библиотекăна 35 тĕрлĕ журнал, 34 тĕрлĕ хаçат килсе тăрать.

Вулакансен йышĕ те ÿссех пырать. Пайанхи кун тĕлне библиотекăран йаланах кĕнекесем илсе тăракансем пурĕ 1000 çын ытла. 1937 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа нойабрĕн 25-мĕшне çитиччен кĕнеке илме тата хаçат-журнал вулама пыракансем 39 130 çын пулнă, вĕсем 24.657 кĕнеке илсе вуланă.

Колхозниксене тата шкул ачисене интереслентерекен кĕнекесене колхозпа шкул патне çывăхтарас шутпа, кăçал çуркунне библиотекăсем 18 организациленĕ, унта пурĕ 632 кĕнеке, вулакансем йышĕ—1880 çын.

Библиотекăн ÿсĕмĕсем чылай. Анчах районти организацисем: çутĕç пайĕ, райĕçтăвком тата хула совечĕ те библиотекăна кирлĕ таран пулăшу парса пымаççĕ.

П. Иванов.

Саслă кино район центрĕнче

Вăрнар районĕнче иртнĕ çулсенче калаçакан кино пĕрре кăна пулнă. Кăçал 3 саслă кино-установкă ĕçлет. Çак кунсенче Нурăс йалĕнче тепĕр калаçакан кино-установкă ĕçлеме тытăнать.

Иртнĕ çулсенче куллен 2 сеанс кăтартмалăх та çын пухăнмасчĕ. Халĕ кино куракансен йышĕ ÿссех пырать. Акă, нойабрĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа виçĕ кун хушши районри клубра „Чапаев" кино-картинă кăтартрĕç. Унтан „Канал Москва—Волга" кино, нойабрĕн 25-мĕшĕнчен 4 кун хушши „Петр I" кинокартинă кăтартрĕç. Халăх çак кинокартинăсене курма питĕ нумай пынă. Кулленех 4 сеанс кăтартрĕç.

Кино курма йалсенчен те пыраççĕ. Мăн Йавăш, Йермошкă колхозникĕсем автомашинăпах, ытти колхозсенчен лашапа пырса курчĕç.

Йев. Воробйов.

М. Горький йачĕпе тăракан библиотекăра

Шупашкарти М. Горький йачĕпе тăракан библиотекăна вулама çÿрекенсен хисепĕ кунран кун ÿссе пырать. Нойабрĕн 30-мĕшĕнче библиотекăра пĕр кун хушшинче 731 çын пулнă.

Аслă Совета суйлама хатĕрленнĕ май Сталинла Конституци çинчен тата çĕнĕ суйлав саккунĕ çинчен калакан кĕнекесен выставкине организациленĕ.

Йулашки кунсенче вулакансем С. М. Киров çинчен калакан литературăсене нумай ыйтаççĕ.

ИЗВЕЩЕНИЕ

Некоторые призывники при отправке в Красную армию после составления списков избирателей НЕ ПОЛУЧИЛИ „удостоверения на право голосования" на выборах в Верховный Совет СССР, вследствие чего не могут быть допущены к голосованию в войсковых частях РККА. Поэтому просьба к председателям сельских советов и горсоветов депутатов трудящихся в соответствии со статьей 15 Положения о выборах в Верховный Совет СССР срочно выслать в Военные Комиссариаты по месту призыва и отправки призывников, отправленных в РККА ПОСЛЕ СОСТАВЛЕНИЯ СПИСКОВ ИЗБИРАТЕЛЕЙ „УДОСТОВЕРЕНИЯ НА ПРАВО ГОЛОСОВАНИЯ" на ВЫБОРАХ в ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ СССР для пересылки их Военкоматами в части войск.

Военком ЧАССР капитан ИЛАКИН.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

СОЙУЗОРГУЧОТĂН

Горькинчи учотпа економикăлă вĕренÿ комбиначĕн

Чăваш республикинчи филиалĕ

(адрĕсĕ: Шупашкар хули, Канаш урамĕ, 18)

БУХГАЛТЕРСЕН КУРСНЕ

вĕренме илесси çинчен пĕлтерет, курсра производствăран татăлса вĕренмеле, вĕренсе тухнă хыççăн Чăваш АСС Республикинчи районсенчи хуçалăхлă организацисенче ĕçleme кайаççĕ.

Курса çичĕ çултан кайа мар вĕреннисене тата счетоводствăн двойной системи тăрăх пĕр çултан кайа мар ĕçленисене илеççĕ.

Курса вĕренме кĕрес текенсен 1937 çулхи декабĕрĕн 20-мĕшчен çакăн пек документсем тăратмала:

1. Анкетăпа зайавлени.
2. Вĕренни çинчен справкă.
3. Счетоводствăпа ĕçленĕ стаж çинчен справкă.
4. Сывлăх çинчен справкă.
5. Икĕ фото картăчкă.
6. 20 пуслăх икĕ почтă марки.

Курсра вĕренме суйласа илнĕ çынсене уйрăмăн пĕлтерсе Шупашкар хулине чĕнеççĕ, унта çичĕ çул вĕренмелли шкул программипе политграмăтă, математикă тата вырăс чĕлхи тăрăх, çавăн пекех бухгалтĕрла учот никĕсĕсем тăрăх испытанисем тытмала.

Курсра вĕренме илнĕ çынсене обшчежити тата стипенди пулать.

Кунсăр пуçне тата учот работникĕсем: бухгалтерсем, счетоводсем, статистиксем хатĕрлес, вĕсен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе курссемпе семинарсем ирттерме хуçалăхлă организацисенчен зайавкăсем йышăнать.

3—2

„РОССНАБФИЛЬМ" трестăн Чăваш кантурĕ

Чăваш АСС Республикинчи кино-театрсен екранĕсем çине кăларать:

Саслă фильм

„Доклад товарища Сталина И. В. о проекте Конституции на VIII-м Всесоюзном С'езде Советов 25 ноября 1936 года"

Çĕнĕ саслă фильм

ЙУРĂ-ПОЕМА

„КОЛЫБЕЛЬНАЯ"

„Союзкинохроникăн" Мускаври студийĕ тунă.
Автор режиссер ДЗИГА ВЕРТОВ.
Композиторсем—Даниил тата Димитрий Покрасс.
Йуррине поет-орденоносец Лебедев-Кумач çырнă.

Вырăнти кино-театрсене хăçан кăтартассине хаçатсем çинче пичетленине тата радио тăрăх пĕлтернисене асăрхăр!

„РОССНАБФИЛЬМ"

2—1

Шупашкар хулинчи ĕççыннисене асра тытма

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ГОРТОП

(хутмали вут-шанкă хатĕрлекен организаци)

кăçалхи сезонра хутма Шупашкар хулинчи мĕн пур ĕççыннисенчен

вутă хăтĕрлеме заказ йышăнать

Заказ йышăннă чухне расчота Гортоп кантурĕнче тăваççĕ. (Максим Горький урамĕ; 23-мĕш номĕрлĕ çурт).

Вут-шанкине çуна çулĕ пулсан Атăл хĕрринчи складран параççĕ. Çуна çулĕ пулаччен Гортопăн Атăл хĕрринче пăрахăç йăвăçсем сутлăх пур, вĕсем çунтарма та, карта-хура тытма та йурăхлă.

3—3

Суккăр ачасене вĕрентмелли Улатăрти туллимар вăтам шкул

Декабĕрĕн 1-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче Чăваш республикĕнче пурнакан суккăр ачасене вĕрентме илет.

Шкула (шкул çулне çитнисене) 7 çулхисенчен пуçласа 11 çулхисем таран илеççĕ.

Суккăрсен шкулĕнче туллимар вăтам шкул программи тăрăх вĕрентнисĕр пуçне тата тĕрлĕрен профессисене тата музыкăна вĕрентеççĕ.

Вĕрентме йышăннă ачасене шкул хăйĕн вăйĕнчен тытса усрать: тăрантараççĕ, обшчежити пур, çывăрмалли вырăн, одейал тата ыттисем те тÿлевсĕр пулаççĕ.

Суккăрсен шкулне вĕренме кĕме çакнашкал документсем кирлĕ: зайавлени, миçе çула çитни çинчен метрикă хучĕ, сывлăх пирки тухтăртан илнĕ справкă тата 30 процентран кайа мар куç сывлăхне пĕтерни çинчен справкă.

Вĕрентме 1938 çулта йанварĕн 1-мĕшĕнче пуçлаççĕ. Зайавленисене çак адреспа йамала: г. Алатырь, Чувварлейский бор. Республиканская школа слепых, дирекции.

ДИРЕКЦИ.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 922 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13964. 58—92 см. 1—1 п. л.

1937 ДЕКАБĔР 4 ШĂМАТКУН 277 (4789)-мĕш №

Пĕр №-рĕ 10 пус — 19-мĕш çул тухать — Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Çĕршывăн хăватлăхне ÿстермели тата массăсен пурнăçне лайăхлатмали план

Пайан епĕр промышленнăç производствипе чукунçулсен 1938 çулхи тата 1938 çулхи пĕрремĕш квартăлти ĕçĕсен планĕ çинчен правителствă йышăннă постановленине пичетлесе кăларатпăр. Çак документ—политика тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк вырăнта тăрать, унăн халăх хуçалăхĕнчи хакĕ калама та çук пысăк. Çак документ пĕтĕм тĕнчене хуçалăхăн кризиссене, економикăла кисренÿсене пĕлмен социалисăмла системи пур йенчен те малта тăнине питĕ ĕненмеле те хăватлăн кăтартса парать.

Сталинла Конституцире—социалисăмла пурнăçăн никам пăсма пултарайман саккунĕнче çапла çырса хунă: „ССР Союзĕн хуçалăхла пурнăçĕ государствăн халăх хуçалăх планĕ тăрăх обществăн пуйанлăх шутне ÿстерес шутпа, ĕççынnисен пурлăхĕпе культурлăхне пĕрмайах хăпартса пырас шутпа, ССР Союзĕ никама пăхăнса тăманнине тата унăн оборони хăватне тĕреклетес шутпа йĕркелесе пырать".

Пайан епĕр пичетлесе кăларакан правителствă йышăннă постановленире пирĕн индустрин малала çĕнтерсе пырассин пит те пысăк программине ăнланмала та кĕскен çырса хунă. 1936 çултах ССР Союзĕн промышленнăç хăйĕн валовой продукципе Йевропăра пĕрремĕш вырăна, тĕнчере иккĕмĕш вырăна тухрĕ. Сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн малтанхи çулĕнчи промышленнăç производствин планĕ промышленнăç продукцине кăçалхи çулхипе танаштарсан 15,3 процент ÿстерме палăртать. Çак плана большевикла пурнăça кĕртни пирĕн тăван çĕршывăн обществăлă пуйанлăхне питех те вăйлăн ÿстерет, ăна хăватлă та тĕреклĕ индустрилĕ державă тăвать, Совет Союзĕн оборонă пултарулăхне татах та вăйлăн тĕреклетет, пĕтĕм ĕççынnисен пурнăçĕпе культурине татах та çÿле çĕклемеле тăвать.

ССР Союзĕн промышленнăç продукцийĕ çитес çулта 15,3 процент ÿсни, çав вăхăтрах капиталисăм çĕршывĕнчи економикăра çĕнĕ кризис çывхарса килни,—çакă икĕ системăн ăмăртăвĕнчи — социалисăмла тата капиталисăмла системăсем хушшинчи ăмăртура кам вăйлăраххине, çĕнтерÿ—социалисăмла системă йенче пулнине, капиталисăмла системă йенче—вилĕм тăнине тепĕр хут пит те уççăн кăтартса парать.

Промышленнăçăн 1938 çулхи ĕçĕсен программинче Ленин—Сталин партийĕпе Совет правителстви ĕççынnисен материаллă пурнăçне пĕрмайах ÿстерсе пырассишĕн, халăх куллен кирлĕ таварсем ыйтнине пĕтĕмпех ĕçе кĕртессишĕн тăрăшни уççăн курăнса тăрать. Пĕрремĕшĕ,—промышленнăçра тата транспортра ĕçлекен мĕн пур рабочисен ĕçукçине иртнĕ çулсенчи пекех, малашне те ÿстерсе пыма палăртнă. Уйрăм халăх комиссариачĕсем тăрăх рабочисен ĕçукçи кăçалхи çулхи ĕçукçипе танлаштарсан 10 процент таран ÿсет. Иккĕмĕшĕ,—ку 1938 çулхи планăн палăрса тăракан уйрăмлăхĕ,—çăмăл тата апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕсен производстви пысăккăн ÿсет, вăл комиссариатсен промышленнăç продукцийĕ халăх валли кайать. Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссариачĕн планĕ 1937 çулта 15,75 миллиард тенкĕлĕх пулнă, 1938 çулта çак комиссариатăн промышленнăçĕ 16.520 мĕлйун тенкĕлĕх тавар туса кăлармала. Ку вăл—çăмран тата çÿç-кантăртан тĕртсе тунă вуншар миллион метр пир-авăр, ку вăл—миллионшар мăшăр атă-пушмак, ку вăл—çĕршер пин костюм тата ыттисем те.

Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕн промышленнăçĕн продукцийĕ кăшт сахалтарах, анчах ĕлĕкхинчен чылай нумай ÿсет. Кăçал 12,8 миллиард тенкĕлĕх пулнă пулсан, 1938 çулта 14.000 миллион тенкĕлĕх пулать. Партин Сталинла Тĕп Комитечĕ тата Совет правителстви пирĕн тăван çĕршыври ĕççынnисене пуйан, културлă, телейлĕ пурнăç туса пама мĕн кирлине пурне те тăваççĕ.

Çак вăхăтрах, ССР Союзĕн чикки лешйенче, капиталиссем пуç пулса тăнă çĕрте, ĕççĕр тăрса йулнисемпе çурма ĕççĕр йулнă вуншар мĕлйун ĕççынnисен чухăн, выçă пурăнăçа тÿссе иртерме лекет. Йулашки икĕ уйăх хушшинче Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче, производствă чакнă пирки, çĕршер пин рабочисене урама хăва-ласа кăларса йанă.

Пайан социалисăм çĕршывĕпе капиталисăмла çĕршывсем хушшинчи тĕп ăмăрту хуçалăх тĕлĕшĕпе пырать. Çак ăмăртури кĕрешÿн тĕп виçи—ĕçтухăçлăхĕ пулать. Пирĕн халăх хуçалăхĕ пит те пысăк çитĕнÿсем тăвать пулин те, епĕр ĕçтухăçлăхĕ тĕлĕшĕпе техника тĕлĕшĕнчен малта тăракан капиталисăмла çĕршывсенчен кайа йулатпăр-ха. Сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн малтанхи çулĕнчи промышленнăç производствин планĕ пирĕн индустрин пур отраçлисенче те ĕçтухăçлăхне ÿстерме палăртать. Çапла йăвăр промышленнăçра пĕр рабочин çулталăкра 14 283 тенкĕлĕх продукци туса кăлармала, ку вăл 1937 çулти ĕçтухăçлăхĕпе танлаштарсан 114,4 процент пулать. Паллах, ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли кампани пĕтĕм çĕршывĕпе сарăлнă вăхăтра пулса пыракан стахановла йухăмăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ 1938 çулта ĕçтухăçлăхне ÿстермеле тунă плана ытлашшипех тултарма май парасси пирки нимĕн иккеленмели те çук.

Ыран, 1937 çулхи декабĕрĕн 1-мĕшĕнче, социалисăмла çĕршыври фабрикăсенче, заводсенче, Мускав хулинчи Сталински районĕнчи стахановецсем пуçарнипе, стахановла рекордсен Сталинла вунăкунлăхĕ пуçланать. Рабочи клас ССР Союзĕн Аслă Совечĕн суйлавне ĕçтухăçлăхне пысăккăн ÿстернипе кĕтсе илме тăрăшать, кĕтсе илет те. Вăл çакна шантарать: хуçайственниксем, партипе профсойуз организацисем тĕрĕс йертсе пырсан, вĕсем ĕçре пулăшсан, стахановецсемпе ударниксем 1938 çулта социалисăмла ĕçĕн питĕ паха тĕслĕхĕсене кăтартĕç.

Правителствă заданийĕсем тăрăх тунă плансенчен иртерсе фабриксемпе заводсем валли „оперативлă плансем" текен плансем тăвас практикăна, вăл тĕрĕс мар, производствăна дезорганизацилет тесе шутласа, правителствă пăрахăçа кăларчĕ. Ку таранччен главкăсемпе трестсенчен нумайĕшĕ хăйсене страхлама хăйсен предприйатисем валли правителствă заданийĕсенчен иртерсе производствăлă плансем туни факт пулса тăрать вĕт! Кунашкал ĕçе тума йурамасть, ку вăл—государствăна хирĕçле ĕç. Мĕншĕн тесен, çакнашкал „оперативлă плансем" пирĕн промышленнăçри большевикла йĕркелĕхе пăсаççĕ, государствăн планланă ĕçне аркатаççĕ, чĕрĕ тавар, укçа-тенкĕ тата оборудованисемпе пĕлсе усă курма чăрмантараççĕ. Ун пек ĕç троцкисла-бухаринла тата ытти шпионсемпе сăтăрçăсене çеç усăлă.

Совет Союзĕн Халăх Комиссарĕсен совечĕ иртнĕ вăхăтра промышленнăç продукци туса кăлармалли плана тултарманнирки кăçал правителствă пана задани умне хушса плансем тума чарчĕ. Ку вăл социалисăмла хуçалăхра кашни завод, кашни цех пĕр пек ĕçлемелине, пĕр чарăнмасăр, нимĕн иккеленмесĕр, штурмсăр ĕçлемелине халĕ те ăнланман хуçайственниксене çапни пулать. Çакна ăнланса илес пулать: кашни вунăкунлăхра, кашни уйăхра, кашни квартăлта государствă планне тултаракан, ССР Союзĕ чиккисен лешйенчи çавăн пек заводсенчен лайăх продукци, сахал мар, нумайрах продукци паракан завод çеç социалисăмла ĕçлет.

Промышленнăç производствин 1938 çулхи программине, çавăн пекех пирĕн индустрин çитес çулхи пĕрремĕш квартăлĕнчи ĕçĕсен планне те вăхăтра çирĕплетсе, вăхăтра пичетлесе кăларнă. Сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çулĕ пуçланиччен тепĕр уйăх. Кашни наркомата, главкăна, кашни предприйатине çитес çула лайăх хатĕрленме вăхăт çителĕклĕ. Сăтăрçăсен йулашкисене вимĕн хĕрхенмесĕр тăпăлтарса кăларасси социалисăмла економикăн пур отраçлисенче те çитĕнÿ тума кирлĕ услови пулса тăрать.

„Пирĕн условисенче хуçайственник йачĕ аслă йат пулса тăрать", тесе каларĕ Сталин йулташ. Халăх кашни хуçайственника пысăк хисеп парать, шанса тăрать. Халăх шаннине ĕçе кĕртмеле, большевикла ĕçпе тĕрĕсе кăлармала. Кăçалхи çулхи государствă планне ăнăçулă тултарни, 1938 çулхи промышленнăç производствин программине тултарма пит те лайăх хатĕрлени—акă мĕн кĕтет совет халăхĕ хуçайственниксенчен, акă мĕн кĕтеççĕ вĕсенчен партин Сталинла Тĕп Комитечĕпе Совет правителстви.

(„Правда")

Промышленнăç производствин 1938 çулхи тата 1938 çулхи пĕрремĕш квартăлти программипе чукунçулсен ĕçĕсем çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

Промышленнăçăн тата транспортăн 1937 çул хушшинчи ÿсĕмне хисепре тытса тата халăх хуçалăхне малала хăпартма, çĕршывăн оборонă пултарулăхне малала çирĕплетме тата ĕççынnисем куллен кирлĕ таварсене ыйтни ÿссех пынине кăнăçтарма, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

I. 1938 çулхи план тăрăх

1. 1938 çула валли промышленнăç производствин планне пĕтĕм союзлă тата союзлă-республикăлă промышленнăç халăх комиссариачĕсем тăрăх, вырăнти промышленнăçăн республикисенчи халăх комиссариачĕсем тăрăх тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Заготовкăсен Комитечĕ тăрăх 84,3 миллиард тенкĕлĕх çирĕплетес (1926/27 çулсенчи улшăнман хаксемпе),—вăл 1937 çулхипе танлаштарсан 15,3% ÿсни пулать,—çав хисепрен:

Йăвăр промышленнăç тăрăх (Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ, Машиностройени Халăх Комиссариачĕ, Оборонă промышленнăç Халăх Комиссариачĕ)	43,90	миллиард	тенкĕ
Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх	16,52	„	„
Апат-Çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх	14,00	„	„
Вăрман промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх	3,84	„	„
Союзлă республикăсен вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕсем тăрăх	3,84	„	„
ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Заготовкăсен Комитечĕ тăрăх	2,20	„	„

2. Ĕç тухăçлăхĕ тата ĕçукçи тĕлĕшпе 1938 çула валли çакан пек заданисем тăвас:

Йăвăр промышленнăç тăрăх (Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ, Машиностройени Халăх Комиссариачĕ, Оборонă промышленнăç Халăх Комиссариачĕ) пĕр рабочи пуçне çулталăкра 14.283 тенкĕлĕх продукци йе 1937 çулта пуласса кĕтнинчен 114,4% туса кăлармала тата рабочин çулталăкри вăтам ĕçукçийĕ 3.707 тенкĕ йе 1937 çулта пуласса кĕтнинчен 110,1% пулмала тăвас;

Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх пĕр рабочи пуçне çулталăкра 11.537 тенкĕлĕх йе 1937 çулта пуласса кĕтнинчен 111% продукци туса кăлармала тата рабочин çулталăкри вăтам ĕçукçийĕ 2.593 тенкĕ йе 1937 çулта пуласса кĕтнинчен 110% пумала тăвас;

Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх пĕр рабочи пуçне çулталăкра 17.170 тенкĕлĕх йе 1937 çулта пуласса кĕтнинчен 111 процент продукци туса кăлармала тата рабочин çулталăкри вăтам ĕçукçи 2.604 тенкĕ йе 1937 çулта пуласса кĕтнинчен 108% пулмала тăвас;

Вăрман промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх (фабрик-завод промышленнăçĕ) пĕр рабочи пуçне çулталăкра 10.255 тенкĕлĕх йе 1937 çулта пуласса кĕтнинчен 113 проц. продукци туса кăлармала тата рабочин çулталăкри вăтам ĕçукçийĕ 2.589 тенкĕ йе 1937 çулта пуласса кĕтнинчен 109% пулмала тăвас.

3. Промышленнăç продукцине туса кăларма ларакан хака йÿнетес тĕлĕшпе çакăн пек заданисем тăвас (1937 çулхи çулталăкри вăтам виçерен—процентсемпе):

Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх	3,4 %
Машиностройени Халăх Комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх	5,4 %
Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх	1,9 %
Апат-çимĕç промышленнăçĕн Халăх Комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх	2,3 %
Вăрман промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх (фабрик-завод промышленнăçĕ)	3,0 %

4. Производствă предприйатийĕсем валли правителствă заданийĕсенчен тухса тăракан плансенчен те ÿстерсе „оперативлă плансем" текеннисене тăвас практикăна, вăл тĕрĕс мар тата производствă ĕçне пăсать тесе, сивлес.

Çавăн пекех промышленнăçăн правителствă тунă планĕсене, вĕсем çумне иртнĕ вăхăтра туса кăларманни йулнă промышленнăç продукцине хушса, ÿстерес практикăна чарса хурас.

Халăх комиссариачĕсене пурне те промышленнăçăн тĕп управленисем валли тата уйрăм предприйатисем валли плансене правителствă çирĕплетнĕ заданисемпе шăпах шай туса пама хушас.

ССР Союзĕн Государствă План Комиссине халăх комиссариачĕсем предприйатисене валли çирĕплетекен квартăл планĕсем тĕрĕссине тĕрĕслесе тăма хушас.

5. Промышленнăçлă халăх комиссариачĕсене пурне те кашни халăх комиссариачĕн 1938 çулхи производствă планĕ çинчен руководствăлă приказсем хатĕрлесе, 1937 çулхи декабĕрĕн 25-мĕшĕнчен кайа йулмасăр ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Советне тăратма хушас. Çав приказсенче промышленнăçăн тата унăн уйрăм отраçлисен 1937 çулхи ĕçĕсене хакланă никĕс çинче халăх комиссариачĕн тата промышленнăçăн уйрăм отраçлисен производствă планĕн чи пысăк ыйтăвĕсем тĕлĕшпе кăтартусем памала.

6. 1938 çулта чукунçул транспорчĕ талăкра вăтамран 95 пин вагон тиемеле, 568 миллион тонна груз турттармала тăвас. Пĕр работник пуçне ĕç тумала—398,4 пин тоннă километр (çакăн пек виçе çине куçарса шутланăн) йе 1937 çулта пуласса кĕтнинчен 106,5%, работникăн вăтам ĕçукçийĕ 3 590 тенкĕ (нумай çул ĕçленишĕн хушса панине те шутласа) йе 1937 çулта пуласса кĕтнинчен 105,6% пулмала тăвас.

II. 1938 çулхи 1-мĕш квартăлти план тăрăх

1. 1938 çулхи 1-мĕш квартăл валли пĕтĕмсоюзлă тата союзлă-республикăлă халăх комиссариачĕсен, вырăнти промышленнăçăн республикăсенчи халăх комиссариачĕсен тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Заготовкăсен Комитечĕн промышленнăçĕ тăрăх производствă планне (1926/27 çулсенчи улшăнман хаксемпе) 20,2 миллиард тенкĕлĕх çирĕплетес, вăл хисепрен:

Йăвăр промышленнăç тăрăх (Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ, Машиностройени Халăх Комиссариачĕ, Оборонă промышленнăç Халăх Комиссариачĕ)	10,66	миллиард	тенкĕ
Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх	4,02	„	„
Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх	2,90	„	„
Вăрман промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх	1,10	„	„
ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Заготовкăсен Комитечĕ тăрăх	0,61	„	„
Союзлă республикăсен вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕсем тăрăх	0,92	„	„

2. 1938 çулхи 1-мĕш квартăл валли ĕçтухăçлăхĕ тата ĕçукçи тĕлĕшпе çакăн пек заданисем тăвас:

	Пĕр рабочи пуçне продукци туса кăларни (тенкĕпе)	Рабочин квартăлти вăтам ĕçукçи (тенкĕпе)
Йăвăр промышленнăç тăрăх (Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ, Машиностройени промышленнăç Халăх Комиссариачĕ, Оборонă промышленнăç Халăх Комиссариачĕ)	3.465	917
Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх	2.795	631
Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх	3.670	640
Вăрман промышленнăç Халăх комиссариачĕ тăрăх (фабрик-завод промышленнăçĕ)	2.278	622

3. 1938 çулхи 1-мĕш квартăлта промышленнăç продукци туса кăларма ларакан хака чакарас тĕлĕшпе çакăн пек заданисем тăвас (1937 çулхи çулталăкри вăтам виçерен—процентпа):

Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх	1,8
Машиностройени Халăх Комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх	3,5
Çăмăл промышленнăç Халăх Комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх	0,9
Апат-çимĕç промышленнăçĕн Халăх Комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх	0,3
Вăрман промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх (фабрик-завод промышленнăçĕ)	0,6

4. 1938 çулхи 1-мĕш квартăлта чукунçул транспорчĕ талăкра вăтам шутпа 89 пин вагон тиемеле, 129,5 миллион тоннă груз турттармала тăвас.

Чукунçул транспорчĕнче рабочисемпе служащисен хисепĕ 1.275 пин çын пулмала тата квартăлти вăтам ĕçукçи 883 тенкĕ пулмала тăвас.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ
В. Молотов.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ
Н. Петруничев.

Мускав, Кремль,
1937 çулхи нойабĕрĕн 29-мĕшĕ.

Польшă войеншчинин провокацийĕ

ШЕПЕТОВКА, 2/XII (ТАСС). Нойабĕрĕн 29-мĕшĕнче, каçхиве, Польшăри Здолбуново станцинче, Польшăран ССР Союзне таврăнакан совет пойăсне кĕтмен çĕртенех конвой çавăрса илнĕ. Пойăса çавăрса илекенсем хушшинче хăйсене çар çыннисем пек тыткалакан çынсем нумай пулнă, вĕсем çар тумтирне васкавлăн улăштарса граждăн çыннисен тумтирне тăхăннăскерсем пулмала.

Пойăс çинчи пирĕн бригадă йаланах, документсене майлаштарнă хыççăн, пойăс çинче хăйсен вырăнĕсене ирекленех йышăнна пулсан, ку хутра бригадăри çынсене кашнинех кÿрентермеле ухтарнă, тумтирсене тата урана тăхăннисене те хывтарса пăхнă. Польшă полицинчи çынсем тата офицерсем, иртĕнсе кайнăскерсем, ĕçпăшалпа хăрата-хăрата ухтарнă. Вагон ураписене çу сĕрекен Хинчук йулташ ухтарма парасшăн пулман, вара ăна хĕненĕ.

Çавăн пек ухтарнă хыççăн та, Польшăн Здолбуново станцинчи влаçĕсем пойăс çинчи пĕтĕм бригадăна, конвой аллине илсе, пĕр вагона пуçтарнă, пойăсăн чи хыçри вагонăн кондукторне пойăс мĕнле пынине пăхса пыма паман. Çитменнĕ класлă вагонсенче пуринче те електричество çуттине сÿнтернĕ.

Кайарахпа çакă палăрнă: ку вăл тата сĕмсĕртерех, тата ирсĕртерех событисен пуçламĕшĕ çеç пулнă.

Совет чиккине çитес çĕрти Могильйаны станцинче пирĕн машинис Савийÿк йулташ, пойăс тапрансан кайас умĕн, сигналăн çуттипе, çакна курнă: Польшăн çав станцинчи пĕр стрелочникĕ класлă вагон патне хăварт чупса пынă та унта темскерле бидон пăнă.

Совет чикки патне çитсе пынă чухне çемçе вагонра „кĕтмен сĕртен" пушар сиксе тухнă. Савийÿк йулташ, пушара сÿнтерес тесе, тревогă тунă. Пойăс çинчен сиксе тухнă Польшă агенчĕсем—ахаль çынсен тумтирлисем тата çар формăлисем—хăратса тата кăшкăрса машиниса çунакан составпах совет территорине каçарса йама хăтланнă. Савийÿк йулташ, хăратнине пăхмасăрах, хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр, çунакан вагона ытти составран вĕçертсе хăварнă.

Польшă войеншчини тепĕр кунне те çаплах провокаци тунă. Вăл кун, Польшăпа Совет Союзĕ тунă килĕшÿ тăрăх, Могильйаны станцине, унта пулнă ĕçе вырăнта тĕпчеме, кăнтăр-хĕвеланăç чукунçулĕн представителĕсем—движени службин отделенин начальникĕ Черный йулташ тата вагон участкин начальникĕ Воронин йулташ пынă. Çавнашкал пулса тăнă ĕç пирки ÿкĕнес тата çынпа çын пек пулас вырăнне, Польшă офицерĕсем совет чукунçул работникĕсене хăйсен служба вагонĕпе усă курма паман. Вĕсене чикĕ патĕнчи постăн çуртне вырнаçтарнă та постран тухса çÿренĕ чухне вĕсенчен пĕр утам та йулмасăр çÿреме конвойсем тăратнă. Унтан та ытларах, декабĕрĕн 1-мĕшĕнче çĕрле, 4 сехетре, пушар мĕнле пулнине палăртса çитерне хыççăн, Польшă офицерĕсем Совет делегацине çуранах Польшă территоринчен тухса кайма хушнă. Пирĕн чукунçул работникĕсем паллах ĕнтĕ, çавна тума килĕшмен, уншăн тарăхнă, анчах ирхине ултă сехетченех вĕсен Польшăн чикĕ патĕнчи постĕнче пулмала килнĕ.

Совет делегачĕсене следствин пĕтĕм материалĕсене паман. Васкаса çырнă протокол пеккине çеç панă. Çав протоколра Польшă влаçĕсем пойăса вут тивертнишĕн йăпне пойăс бригади çине йăвантарма пăхаççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем, пĕрне пăсса, пойăс бригадине конвойа илсе, пĕр уйрăм вагонра тытнă, пойăс мĕнле пынине те пăхса пыма паман.

Совет делегацийĕ, çÿлерех кăтартнă фактсем тăрăх, хай çырнă протоколра Польшă войеншчинин провокацилĕ ĕçĕсене пĕтĕмпех палла тунă, пушар пулнишĕн ответлăха тата убыткăсене Польшă çине хунă.

ТАСС асăрхаттарни

— ТАСС шанчăклă çĕртен çакна пĕлнĕ: ССР Союзĕн Варшаври полпредствине, Здолбуновора провокацилĕ ĕç пулнă пирки, протест тума, ĕçе тĕпчесе тухма, айăплисене наказани пама, убыткăсене тÿлеме ыйтма хушнă.

Польшăри массăлă арĕссем

Варшавăран Польшăра коммунисла ĕçсем тăваççĕ тесе шутлакан çынсене массăлăн арĕслени çинчен пĕлтереççĕ. Декабĕрĕн 1-мĕшĕнче полици Варшавăра ухтарусем нумай тунă та ултă çынна арĕсленĕ.

Польшăри телеграф агентстви Вильно хулинче 14 шкул ачине арĕслени çинчен пĕлтерет. Çав шкул ачисене комсомолра тăраççĕ тесе айăплаççĕ мĕн.

Польшăри „Нова правда" хаçат Краков тата Тарнов хулинчен 35 çынна концентрацилĕ лагĕре йани çинчен пĕлтерет. Вĕсене коммунисла ĕçсем тунă, тесе айăплаççĕ.